# Аслă Çĕнтерӳпе саламлатпăр!

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

18 (836) №, 2014, çу, 8

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

## Саламлатăп

**Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин хаклă ветеранĕсем тата тыл ĕçченĕсем, хисеплĕ ентешĕмĕрсем!**

**Сире аслă уяв – Çĕнтерӳ кунĕ – ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!**

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче пире тăнăçлăх тата ирĕклĕх парнеленĕ паттăрсене çуллен чыслатпăр, çапăçу хирĕсенче пуç хунисене асăнатпăр. Çĕнĕ ăрусем паттăрсен умĕнче ĕмĕр-ĕмĕр парăмра, вĕсем пархатарлă ачисемпе мăнукĕсен чĕринче яланлăхах юлĕç!

Пирĕн ентешсем фашизма тĕп тăвассине пысăк тӳпе хывнă. Чăваш Енĕн 210 пин ывăлĕпе хĕрĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин фрончĕсенче тăшманпа харсăррăн тата паттăррăн кĕрешнĕ.

Тылра хĕрарăмсем, ватăсем, ачасем ырми-канми ĕçленĕ. Чăваш Енĕн ĕçчен те ырă кăмăллă халăхĕ мĕн пуррине пĕтĕмпех Аслă Çĕнтерӳ валли панă. Хуласемпе ялсенче эвакуациленĕ предприятисем вырнаçнă, госпитальсем аманнисене йышăннă. Оккупациленĕ территорисенчен тарма тивнĕ 70 пин ытла çынна пирĕн республика тараватăн йышăннă, пурăнмалли кĕтеспе тивĕçтернĕ.

Пирĕн ветерансем – хăйне евĕрлĕ çынсем. Хăрушă тăшмана çĕнтернĕ хыççăн вĕсем мирлĕ вăхăтра паттăр тепĕр ĕç тунă – кĕске тапхăртах çĕр-шыва ишĕлчĕкрен çĕкленĕ.

Шел, вĕсен йышĕ çуллен чакса пырать. Паян республикăра – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин 2 пине яхăн инваличĕ тата ветеранĕ, 25 пин тыл ĕçченĕ, çĕнтерӳçĕ-салтаксен тăлăх 6 пин мăшăрĕ. Патшалăхăн тата обществăн вĕсем тĕлĕшпе яланах тимлĕ пулмалла.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисене тата республикăра пурăнакан мĕн пур çынна çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей, мир тата ырă сунатăп! Уяв ячĕпе! Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М.ИГНАТЬЕВ.**



4 стр.

# Уява хатĕрленет ветеран

**Сĕнтĕрвăрри районĕнче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин 835 ветеранĕ пурăнать, вăл шутра инвалидсемпе вăрçа хутшăннисем – 39 çын. Халăха социаллă пулăшу паракан центр ĕçченĕсем Çĕнтерӳ кунĕ умĕн вĕсене çулсеренех киле пырса саламлаççĕ. Çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче центрăн пай пуçлăхĕ Татьяна Жукова тата Ираида Охоткина специалист çак тивĕçе пурнăçламашкăн ирех çула тухнă. Вĕсем Сĕнтĕрвăрри хулинчи 35 ветеран патне çитме палăртнă. Чăваш Ен Пуçлăхĕн саламлă открыткине, парне хутаççине хисеплĕ çынсем патне çитернĕ май ватăсен сывлăхĕпе кăсăкланаççĕ, Çĕнтерӳ парадне йыхравлаççĕ хĕрарăмсем. Соцĕçченсемпе пĕрле эпир те вăрçă паттăрĕсем патне кĕрсе куртăмăр.**

88-ти Николай Тихонов хăнасене кăкăр тулли орден-медальпе, çар тумĕпе кĕтсе илчĕ. Ветеран çулсеренех парада хутшăнать, унта сăмах калать.

«Вăрçă пуçлансан пире, шкул ачисене, нимĕç чĕлхи учителĕ хăйĕн предметне тăрăшсах ăша хывма ыйтатчĕ. «Тыткăна лексен тăшман мĕн калаçнине ăнланма пулать хăть», – тетчĕ. 1942 çулта 7-мĕш класс пĕтернĕ хыççăн химзаводра ĕçлерĕм. Вăй питти çынсем юлманран пире йывăр килчĕ, талăкра 12-шер сехет ĕçлеттĕмĕр», – аса илчĕ ветеран. ФЗОра машинист ăсталăхне алла илнĕскере 1943 çулта фронта илсе кайнă. Кайран, ятарлă курс пĕтернĕ хыççăн, вăл танкист-пулеметчик пулса фронта кĕнĕ. Кенигсберг, Ленинград таврашĕнчи, Инçет Хĕвел тухăçĕнчи çапăçусене хутшăннă.

Николай Павловичăн иккĕмĕш мăшăрĕ /пĕрремĕшĕ чылай çул каялла çĕре кĕнĕ/ Варвара Козловская – вырăс хĕрарăмĕ, Рязань облаçĕнче çуралса ӳснĕ. Вăрçă вăхăтĕнче вăл, 6-ри ача, амăшĕпе пĕрле баржа турттарнă. Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсене юхан шыв урлă каçарни хĕр ача асĕнче ĕмĕрлĕхе юлнă. «Пирĕннисене пăхма хăрушăччĕ: йăлтах суранланса, юнпа вараланса пĕтнĕччĕ, тумĕ çĕтĕк-çурăк... Кусен вара сăнĕ-пуçĕ те, çи-пуçĕ те тап-тасахчĕ...» – аса илчĕ Варвара Павловна.

*Çур чечекпе илемлĕ,*
*кĕр – кĕлтепе.*
**Каларăш.**

## ÇАНТАЛĂК



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 08.05 | + 12 | + 8 |
| 09.05 | + 18 | + 8 |
| 10.05 | + 19 | + 6 |
| 11.05 | + 23 | + 12 |
| 12.05 | + 22 | + 14 |
| 13.05 | + 23 | + 10 |
| 14.05 | + 25 | + 15 |

Рита АРТИ сăн ӳкерчĕкĕ.

**Эсир «Чăваш хĕрарăмĕпе» малашне те çыхăнăва татмасса шанатпăр. Çитес çур çуллăхри çырăнтару хакĕ: 340,44 тенкĕ.**



*ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ*

# Виççĕн – виç шăпа



Ватă çын çемье ăшшине упрама та пулăшать. Ахальтен мар "ватти çук та латти çук", "ватă çын – тăватă çын" тенĕ ĕлĕкех.

Пурнăç çулĕпе тивĕçлĕн утакан çынсемпе паллаштарас килет манăн. Шупашкар районĕнчи Çĕньял тăрăхĕнчи 90 çултан иртнĕ ватăсем пирки каласа кăтартас килет.

Янашкассинчи Анна Потапова /сăн ÿкерчĕкре сулахайран – пĕрремĕшĕ/ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă. 1943 çулта ун патне повестка çитнĕ. Фронтра пĕрле хур тÿснĕ хĕр тусĕсен ячĕсене паян та манман Анна Ивановна, вăрçăра тÿссе ирттерни унăн чунне ĕмĕрлĕх кĕрсе юлнă. Чăваш хĕрĕ Хĕвел анăç фронтĕнче, Кенигсбергра, зенит артиллерийĕнче сăнавçă пулнă. "Смоленск облаçĕнче самолетсене уйăрма вĕреннĕ хыççăн постра тăтăм, 1945 çулта çурла уйăхĕнче яла таврăнтăм", – аса илет 94 çула кайнă ватă.

Вăрçăран таврăнсанах Анна Ивановна шут ĕçне кÿлĕннĕ. Хуçалăхра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Анна Ивановна Янашкасси каччипе, вăрçă участникĕпе, çемье çавăрса икĕ ывăл ÿстернĕ. Халĕ хĕрарăм ялта кĕçĕн ывăлĕн Викторăн çемйипе пурăнать. Ал ă усса лармасть кинемей, килти ĕçсене вăй çитнĕ таран пурнăçлать. "Хамăн хĕрсем çукранах кинĕмсене тăван ачасем вырăннех хуратăп", – тет вăл. Анна Ивановна халĕ мăнукĕсемпе, кĕçĕн мăнукĕсемпе савăнать, вĕсенче чун канăçне тупать.

Янашкассинчи Марина Васильева /сăн ÿкерчĕкре – варринчи/ – 92 çулта. Вăл çак ялтах çуралса ÿснĕ, ял каччине, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин инвалидне, качча тухнă. Медицина ĕçченĕ пулнă май вăрçăран аманса таврăннăскере хĕех сыватнă, ура çине тăма пулăшнă. Марина Зиновьевна 36 çул тухтăрта ĕçленĕ, пенсие тухсан – 12 çул фермăра. Мăшăрĕпе 65 çул кăвакарчăнсем пек шăкăл-шăкăл пурăнчĕç, пилĕк ывăлпа 1 хĕр çуратса ÿстерчĕç. Шел те, мăшăрĕ паянхи кунччен пурăнаймарĕ. Марина Зиновьевна çулĕсене пăхмасăрах ĕççĕр пачах лармасть, пĕрмаях кил хушшинче кăштăртатать, çулла пахчаран тухма пĕлмест, тĕрлĕ çимĕç, улма-çырла ÿстерет. Халĕ ĕнтĕ унăн мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕсем йышлă. "Хăш чухне вĕсен хисепне те манса каятăп, пÿрне хутлатса шутламалла-ха", – шÿтлет савăнса хĕрарăм.

Питтукассинчи Валентина Ластухина та /сăн ÿкерчĕкре сулахайран – виççĕмĕшĕ/ 90 урлă каçрĕ. 1950 çулта вăл Галина Демьянова акушеркăпа Шăмăшра ĕçлеме тытăннă, çĕнĕ чунсене çут тĕнчене килме пулăшнă. Кайран, çав çурт хупăнсан, ялти фельдшерпа акушер çуртне ĕçлеме куçнă. Çав тапхăр çинчен Валентина Родионовна çапла аса илет: "Трахома вăйлă сарăлнăччĕ ун чухне, чире пĕтерме ял-ял тăрăх çÿреттĕмĕр. Тухтăрсем канма пĕлмесĕр ĕçлетчĕç". Халăха сыватас ĕçре вăл 30 çул ытла вăй хунă, ял халăхĕ ăна тăрăшулăхĕшĕн хисеплет.

Валентина Родионовна Питтукасси çыннипе – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕпе Иван Ластухинпа – пĕрлешнĕ. Арçыннăн малтанхи мăшăрĕ аварие лексе çут тĕнчерен уйрăлнă. Валентина 9 ачаллă киле пырса кĕнĕ. Ют хĕрарăма тĕпренчĕксем йывăррăн хăнăхнă. Ама çури амăшĕ вĕсене хăйĕн ачисем пекех юратса пăхни ăнланманлăха сирме пулăшнă. Валентина Родионовна халĕ ывăлĕн Валерин çемйипе пурăнать. Кинемей ĕççĕр пачах лармасть, çулла – пахчара, хĕлле кил картинче тăрмашать.

Виçĕ ватă – виçĕ шăпа... Вĕсем ачисемпе мăнукĕсемшĕн кăна мар, ял-йыш умĕнче те тĕслĕх шайĕнче. Çамрăксене те ĕçчен те ырă чунлă кинемейсенчен пурăнма вĕренме сĕнес килет.

**Ксения МИХАЙЛОВА.**
Шупашкар районĕ.

**«Хыпар», «Çамрăксен хаçачĕ»: электрон çырăнтару**

*2014 çулăн II çурри валли*

**«Хыпара», «Çамрăксен хаçатне»**

*электрон мелпе çырăнса илме пулать.*

*Çур çуллăх хак:*



**«Хыпар» – 90 тенкĕ,**
**«Çамрăксен хаçачĕ» – 50 тенкĕ.**

Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра

*КИВĔ САН ЎКЕРЧĔК*

# Краççын çутипе хаçат кăларатттăмăр

"Чăваш хĕрарăмĕ" хаçатра ĕçлекенсем, сывлăх сунатăп. Сирĕн пата Элĕк районĕнчиУраскилт салинчи 8 ача амăшĕ çырать. Кивĕ сăн ÿкерчĕк ярса паратăп, ăна пичетлессе шанатăп. Вулакансене хамăн пурнăç çинчен каласа кăтартас килет.



Эпĕ Элĕк районĕнчи Ефремкассинче нумай ачаллă çемьере çуралса ÿснĕ. Пире кун çути парнеленĕ çынсене нихăçан та çăмăл пулман, вĕсем пирĕншĕн, тĕпренчĕкĕсемшĕн, пурăннă тесен те йăнăшмăп. Атте тăлăххăн çитĕннĕ. Вăл пĕчĕклех нумай хура-шур курнă. Анне – тулăхрах пурăннă çемьерен. Çамрăклах Элĕк салине сутă тума çÿренĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра çамрăксене евчĕ çемье çавăрма пулăшнă. Манăн аттепе анне те çав йăла-йĕркене пăхăнса пĕрлешнĕ.

Малтанах атте кĕтÿçре çÿренĕ. Кайран ăна парти шкулне хутла вĕренме янă. Çакăнта пĕлÿ илнĕ хыççăн Александр Орлова явапляăрах ĕçсем шанса панă.

Кил хуçи хăйĕн ачисене те вĕрентме тăрăшрĕ. Çапах Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçиччен çуралнисен пĕлÿ илме тÿр килмен. Еликонидăн конюхра, сысна ферминче, дояркăра çанă таварса ĕçлеме тивнĕ. Николай трактор рулĕ умне ларнă.

Эпир, Çĕнтерÿ хыççăн çут тĕнчене килнисем, диплом илнĕ. Анатолий Канашра вакун юсакан завода слесаре вырнаçрĕ. Зойăпа иксĕмĕр Ĕпхÿри полиграфи училищинче вĕрентĕмĕр. Ун чухне ял ачисен тавра курăма аталантармашкăн условисем пулман. Эпир тăван тăрăхран тухса курман тесен те юрать. Пĕрре мана, шкулта вĕреннĕ вăхăтра, йĕлтĕрпе чупма Элĕке илсе кайнăччĕ. 1962 çулта Ĕпхÿ хулине кайни хăех пĕлтерĕшлĕ пулăм шутланнă пирĕншĕн, чăваш çамрăкĕсемшĕн. Хаçатжурнала епле пуçтарса хатĕрлемеллине ăнланса çитме йывăрччĕ. Апла пулин те эпĕ ыттисем пекех нумайрах пĕлме ăнтăлнă. Вăрнар, Йĕпреç хĕрĕсемпе çав тери туслăччĕ.

Алла диплом илсен Элĕк салинчи типографире ĕçлеме пуçларăм. Мана çĕнĕ йыш хавхаланса кĕтсе илчĕ. Ун чухне "Ленин çулĕпе" хаçат кăларатттăмăр. Текстсене сахалăн пуçтараттăмăр. Пирĕнтен ытларахăшĕ ĕçе хăй тĕллĕн вĕреннĕ. Кашнине пĕрер полоса уйăрса паратчĕç. Пуçламăш тата юлашки страницăсем час пулмастчĕç. Пĕрремĕш полосари çĕнĕ хыпарсене чылай кĕтеттĕмĕр. Пирĕн нормăламан ĕç кунĕ шутланнă. Полосасене наборласа çитермесĕр нихăçан та киле каймастпăр. Тĕттĕмленсен краççын çутипе ĕçлеттĕмĕр. Хаçат эрнере виçĕ хутчен тухатчĕ. Маншăн кашни кун патшалăх экзаменĕ пекех туйăнатчĕ.

1966 çулта Аркадий Кустиков редактор мана мастера çирĕплетрĕ. Хут илме Чулхула облаçĕнчи Балахна хулине çÿрени манăçмĕ. Пурăна-киле хаçат пуçтарас ĕçе çăмăллатмашкăн пичет управленийĕ пирĕн типографие линотип машини уйăрса пачĕ. Çав вăхăталла Зоя йăмăкăм Ĕпхÿрен вĕренсе килнĕччĕ ĕнтĕ.

1967 çулта Шупашкарти Пичет çуртне ĕçлеме куçарчĕç. Халĕ те хаçат-журнала юратса вулатăп.

**Роза КАЛМЫКОВА.**

*КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ*

# Чăвашлăх управçи

Муркаш районĕнчи Сосновка ял библиотекинче тĕлĕнмелле лăпкăлăх та хăтлăх хуçаланать. Унăн ертÿçи Татьяна Степанова халăха кĕнеке панипе кăна çырлахмасть, кунта вăл "Чăваш халăх культури", район 70 çул тултарнине халалланă "Чечеклен, Муркаш ен!", "Тăван çĕр-шывăн паттăр ывăлĕсем", "Ал ĕç ăстисен академийĕ" кĕнекесен куравне йĕркеленĕ, тĕрлĕ альбом, буклет илемлĕн, темăпа килĕшÿллĕн майлаштарса хунă. Наци тĕррипе усă курса каплатнă "Çул хыççăн çул", "Пирĕн Шураппасем" стендсем чăваш сĕмĕ кĕртеççĕ.

Вулавăша килекен кашни çынпах пĕр чĕлхе тупма пĕлет Татьяна Зиновьевна. Вĕренекенсене мероприятисене хутшăнтарать, çамрăк ăрăва тĕрлĕ енлĕ воспитани парас ĕçре Сосновкăри тĕп шкулти вĕрентекенсемпе тачă çыхăнса ĕçлет. Ачасене ырă йăла-йĕркене, çемье, этем чысне упрама, аслисене хисеплеме вĕрентет. Чи кирли вара уншăн – чăвашлăха упрасси, ĕлĕкрен пыракан ырă йăла-йĕркепе паянхи пурнăçра май пур таран усă курасси. Татьяна Зиновьевнăн ывăлĕсене çара ăсатнă чух лаша кÿлсе капăрлатнă урапасемпе ял-ял тăрăх юрласа çавăрнăчĕç. Унтанпа 4-5 çул иртрĕ пулин те ăсату касĕ халĕ те куç умĕнчех. "Мухтанатăп хам чăваш пулнипе, халăхăмăрăн çĕр пин юрри-кĕввипе, çĕр пин асамлă тĕррипе тата чĕкеç чĕлхи евĕр çепĕç чĕлхипе", – тет йăла-йĕрке управçи.

Культура çулталăкне халалласа "Чăваш халăх культури" кĕнекесен куравне йĕркелерĕ. Музей çумĕнчи "Шураппа" клуба çÿрекенсем мероприятисене хăйсем тĕрленĕ, вирьял чăвашĕсен вун-вун çултан та кивелмен шап-шурă кĕпипе, чăваш тĕррилле шурă тутăрĕпе, хăюпа илемлетнĕ саппунпа çÿреççĕ. Вĕсем мар-и-ха чăваш культурин чăн-чăн управçисем?

Кашни мероприятиех тĕплĕн хатĕрленет Татьяна Степанова, темиçе ăрăва хутшăнтарать, куравсем йĕркелет, паллă çынсемпе тĕл пулу ирттерет.

Общество ĕçĕнче те хастар Татьяна Зиновьевна. Васкассинчи информаципе культура центрĕнче мĕнле кăна мероприяти иртмест пуль? Ял ĕçченĕсен, шкул ачисен, ал ĕç ăстисен е уйрăм çемьесен уявĕ – яланах ун тÿпи те сумлăн курăнать кашни уяврах.

Çав хушăрах хăй кил ăшши, юратнă мăшăр, ытарайми анне пулнине манмасть хĕрарăм. Çемье çирĕплĕхĕ чи малтанах юратуран, тÿсĕмлĕхрен, килĕшÿпе ĕçченлĕхрен килнине асра тытать. Ачисем те ĕçченлĕхпе, сăпайлăхпа палăрса тăраççĕ. Юратнă мăшăрĕпе Леонид Васильевичпа виçĕ патвар ывăл çитĕнтерчĕç. Татьяна Зиновьевнăн ашшĕпе амăшĕ Зиновий Михайловичпа Вера Григорьевна Кутузовсем пурнăçра та, ĕçре те яланах хастар пулнă, 6 ачине те аслă пĕлÿ парса пурнăç çулĕ çине кăларнă, ытти çемьешĕн ырă тĕслĕх пулнă. Килте яланах килĕшÿ тата çирĕп йĕрке хуçаланнине курса çитĕннĕ вĕсен аслă хĕрĕ Татьяна. Тен, çавăнпах пулĕ культура ĕçне суйласа илнĕ вăл. Сосновкăри вулавăша 27 çул ĕнтĕ пĕр улшăнмасăр ертсе пырать хастар хĕрарăм. "Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ятпа чысланă ăна. Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Сосновка тăрăхĕн депутачĕ пулма та шаннă ăна суйлавçăсем. Ĕçне кура – хисепĕ. Ял тăрăхĕ, район, республика шайĕнче панă тав хучĕсем вара вăл кулленхи ĕçре маттур пулнине çăннипех çирĕплетеççĕ. Çакăн пек çынсем пулсан ял пурăнать-ха, чăваш наци культури те сÿнсе лармасть.

**Зинаида АНТОНОВА.**
Муркаш районĕ.





САМАХ ПАРĂР-ХА

# 69-мĕш çуркунне...

**Маргарита ИЛЬИНА**

**Пĕр-пĕрне саламланă май ырлăх-сывлăх, телей, юрату сунасси йăлана кĕрсе кайрĕ ĕнтĕ. Чылай чухне сăвва пăхмасăр вĕреннĕ пекех шăранаççĕ çак сăмахсем. Анчах кунсăр пуçне нумайăшĕ, пирĕнтен кашниех хăçан та пулин калаках çакна, хушса хурать: "Вăрçă кăна ан пултăр санăн пурнăçунта..."**

**Телее, паянхи ăру мирлĕ тӳпепе савăнать. Çар самолечĕсем пуç çийĕн Çĕнтерĕве халалланă уявсенче тата парадсенче кăна кĕрлесе вĕçсе иртеççĕ. Этемĕн пурăнас кун-çулне татакан техникăпа та мирлĕ халăх çавăн чухне çеç "паллашма" пултарать. 69-мĕш çул мирлĕ çуркунне çитсе çамрăк чечеккурăкпа, çĕнĕ çулçăпа савăнтарать. Ветерансен чунĕсенче кăна ниепле те лăпкăлăх йăва çавăраймасть... Тамăка аса илтерекен вăрçăн вĕресе тăракан хуранĕнче иртнĕ вăхăта ĕмĕрлĕхе асран кăлармашкăн пирчесе пĕтереймен суранĕсем те кансĕрлеççĕ-тĕр. Снаряд-граната ванчăкĕсене халĕ те ӳтре йăтса çӳрекен сахал-и? Унсăр пуçне вун çиччĕри йĕкĕтсем, хĕре алăран та тытса курманскерсем, яшлăхне унта, тамăкра, хăварнă-çке... Ӳт суранĕ туртăнсан та чунрине кам сиплĕ? 69 çул – вăтамран çын ĕмĕрĕ. Çапах та, çĕр питне фашизмран тасатма хутшăннă шурă çӳçлĕ салтак ветерансенречĕ çулран çул сайралсах пырать пулин те, пирĕн хушăра пур-ха вĕсем паян та, пур. Çак кунсенче Украина çĕрĕ çинче çĕнĕрен чĕрĕлнĕ вут-пушар вĕсен чĕрисене еплерех ыраттарать-тĕр... Çак халăхăн ирĕклĕхне сыхласа хăварас тесе чăвашсем те паттăррăн çапăçнă-çке. Мĕн чухлĕн выртса юлнă унта вĕсем – кам калĕ?..**

**Юлашки çулсенче Интернетсăр апат çиме те ларайми пултăмăр та – юлашки хыпарсене ун урлă шĕкĕлчесех тăратпăр. Тĕлĕнсе каймалла тискерлĕхсем çинчен каласа кăтартаççĕ. Георгий хăйăвне – Аслă Çĕнтерӳ символне – çакнăшăнах вĕлересле хĕнеççĕ çынсене. Донбасс халăх ополченийĕн ертӳçи Павел Губарев судăн черетлĕ ларăвне çывхарса килекен уяв умĕн кăкăрĕ çине çак хăйăва çакса пырсан хурал туртса илме тапăннине кăтартрĕç телевизорпа. Тытăçу тапрансан: "Вĕлерĕр, хăйăва вара памастăп", – терĕ чунпа парăнман арçын. Çакăн хыççăн унăн аллине каллех йăлмакласа хусканмалла мар çыхса хунă. Чун-хавалĕпе çирĕп ертӳçе хуçас тĕллевпе темĕн те тăваççĕ ĕнтĕ. Унăн пурнăçне сыхласа хăварасси те иккĕлентерет. Паянхи саманара, çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте, çакăн пекки пулса иртни пуçа шăнăçмасть. Украинăн кăнтăр-хĕвел тухăç пайĕнче юлашки кунсенче пулса иртнĕ ĕç-пуçа кăтартма пуçличчен дикторсем ачасене экран çывăхĕнчен айккинерех илсе кайма ыйтрĕç – чуна кисретекен сюжетсем çирĕпленсех çитейменскер ăс-тăна начар витĕм кӳме пултараççĕ. Тĕрĕссипе, ача мар, çĕнĕ хыпарсен кăларăмне вĕçне çитиччен пăхса пĕтерме хамăн та чăтăм çитмерĕ, чун сӳлерĕ. Халĕччен кун пеккисене вăрçă çинчен ӳкернĕ илемлĕ фильмсенче кăна курма тӳр килнĕччĕ...**

**Интернетра цензура çук. Унта кашниех хăйĕн шухăшне ирĕклĕн палăртма пултарать. /Телее, хăть усал сăмахпа вăрçăнма чаракан саккун йышăнчĕç çак кунсенче/. Ку аван. Блогерсене журналистсемпе танлаштарма пуçласси те ку усăлăхра хăçан-тăр йĕрке пур пĕрех пуласса шантарать-ха. Украинăра пурăнакан хĕрпе Интернетра хутшăнатпăр. "Раççей МИХĕсене мĕншĕн ĕненетĕр?" – вĕсем пурте суйнине палăртасшăн хайхи. Журналистсене шанмасан Интернет усăлăхĕнче паян тĕрлĕ çăл куç информацийĕпе паллашма пулнине аса илтеретĕп. Вăл пур пĕрех пур инкекшĕн те Раççее, вырăссене, Путина айăплама тăрсан чăтăм пĕтет. Мĕн, Путин – пĕтĕм Раççей-им? Раççейре, çитменнине, вырăссем кăна пурăнаççĕ-им? 69 çул каялла тĕрлĕ халăх çынни пĕр-пĕрин хулпуççине перĕнсе Çĕнтерĕве туптанине украинсем маннă-им? Совет салтакĕ çĕр-шыв чиккине çитсе малалла кайман тăк Украина пулатчĕ-и-ха паян? Кам пĕлет, Европа фашист атти айĕнче йăванмастчĕ-и? Раççей начар иккен вĕсемшĕн – "аркатакан вăй", НАТО çарĕ вара пурнăç пиллет-шим? Белграда чиркӳре иртекен питĕ мирлĕ мероприятие – Мăн куна – ӳкерме тĕрлĕ çĕр-шывран пынă тележурналистсем хула çине шăпах НАТО самолечĕсем бомба пăрахнине пула вилнине аса илтеретĕп /пирĕннисем ăнсăртран кăна чĕрĕ юлнă/. Хиросимăна, Нагасакие ăçтан манăçа кăларăн? Вьетнамра çынсене çунакан шĕвекпе – напалмпа – çунтарнине те тĕнче ас тăватьтĕр...**

**Пирĕн хивре калаçу майĕпен лăпкăрах юхăма куçать. Чăн та, çав хĕрĕн кăмăлне йăлт улăштартăм теейĕмĕп, çапах та ăçта тус, ăçта тăшман иккенне пуçĕ тавра пĕр виççĕ те пулин çавăрттарса шухăшласа илетех пулĕ тетĕп.**

**...Пуласлăха каланă Ванга Раççей малашлăхне кăсăклă палăртса хăварнă – чĕркуççи çинчен тăрĕ çĕр-шывăмăр, çурăмпа çаврăннисем хăйсемех ун патне пырĕç, çутă, хĕвеллĕ кунсем кĕтеççĕ пире... Çапла пултăрччĕ. Мирлĕ пурнăçшăн, ачисене, мăнукĕсене пуласлăх парнелессишĕн пуç хунă салтаксен чунĕсем ĕмĕрлĕх канăç тупчăр. Паян пирĕн хушăра утса çӳрекен çĕнтерӳçĕсен куçĕсем вара хăйсене чунран хисепленине, сума сунине, мирлĕ пурнăç пилленĕшĕн тав тунине кура савăнăç куççулĕпе кăна шывланчăр.**

АС ТĂВĂМ

# Вĕсен пурнăçĕ вăрçăра татăлнă

Çак эрнере «Çĕнтерӳ» мемориал комплексĕнче Çурçĕр Кавказра пуç хунă ентешсен ячĕпе палăк уçăлнă. Çавăнти юнлă хирĕç-тăрусене пирĕн республикăран 6898 çын хутшăннă, 156 çар çыннипе право хуралĕн ĕçченĕ тăван тăрăха чĕрĕ-сывăн таврăнайман.



Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççейре чи малтан Шупашкарта çакнашкал палăк çĕкленине, паттăр ентешсенчен кашниех орден-медале тивĕçнине, анчах вĕсем наградăшăн мар, тивĕçе пурнăçласа алла хĕçпăшал тытнине палăртнă. Ывăлĕсене çухатнă амăшĕсем умĕнче пуç тайнă вăл. Унпа пĕрле Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, Раççей Геройĕн Игорь Петрикован амăшĕ Анна Егоровна, Çурçĕр Кавказ территорийĕнчи юнлă хирĕç-тăрусене хутшăннисем палăк умне чĕрĕ чечексем хунă.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

Л.ФИЛИППОВА сăн ӳкерчĕкĕ.

АКЦИ

# «Ас тăвăм çурти»

Паян, çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче, Шупашкарта ас тăвăм çуртисене çутаççĕ. Чылайăшĕ кунта фронтовиксен портречĕсемпе, чечексемпе килет. Пĕтĕм Раççейри «Ас тăвăм çурти» мемориал акцине кирек кам та хутшăнса Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсен паттăрлăхне сума сунине, хисепленине палăртма пултарать.

Паттăрсене асрах тытакансене çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче 19 сехет те 30 минутра Шупашкарти «Çĕнтерӳ» асăну комплексĕнчи нихçан сӳнми çулăм патĕнче пуçтарăнма ыйтаççĕ. Акци 20 сехетре пуçланать. Йăлана кĕнĕ пархатарлă çак мероприятие пурте хутшăнма пултараççĕ. Эсир те çурта çутма тăрăшăр!

Çавăн пекех паян ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекин мĕн пур уйрăмĕнче тата республикăри ача-пăча библиотекисенче тăххăрмĕш хут çулленхи «Ас тăвăм çурти» акци иртет.

**Елена АТАМАНОВА.**

ЧЫСЛАВ

# Педагогика – чун туртăмĕ

Иртнĕ эрне кун республикăри ача-пăчапа çамрăксен пултарулăх керменĕнче «Çулталăк вĕрентекенĕ», «Чи лайăх класс ертӳçи», «Чи лайăх воспитатель», «Чи лайăх социаллă педагог», «Чи лайăх психолог-педагог» конкурссен çĕнтерӳçисене чысларĕç.

ЧР вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов каланă тăрăх – пултарулăх тупăшăвне 1500 ытла вĕрентекен хутшăннă. Хăйсен ăсталăхне вĕсем тĕрлĕ меслетпе усă курса уçса панă.

Чи лайăххи кам-ши? Чыслав вĕçне çитиччен çакна вăрттăнлăхра тытрĕç. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев конвертсене уçса çĕнтерӳçĕсен ятне асăнчĕ.

Улатăрти 9-мĕш вăтам шкулти Наталия Нажалкина социаллă педагогсен ушкăнĕнче чи лайăххи пулса тăчĕ, педагог-психологсенчен чи вăйли – Республикăри психологипе педагогика реабилитаци коррекци ĕçченĕ Сергей Педюсев, класс ертӳçисенчен – Комсомольски районĕнчи Тукай Мишер шкулĕн вĕрентекенĕ Гузель Хайртдинова. «Çулталăк воспитателĕ» ята Çĕмĕрлери «Родничок» 19-мĕш ача сачĕн воспитателĕ Татьяна Тетеревова çĕнсе илчĕ. Çĕнĕ Шупашкарти 5-мĕш шкулта ют чĕлхесене вĕрентекен Екатерина Владимирова «Çулталăк учителĕ-2014» ята тивĕçрĕ. Çамрăк педагог тĕрлĕ шайри конкурса хутшăнсах тăрать. 2011 çулта вăл «Чи лайăх класс ертӳçи» пулса тăнă. «Педагогика маншăн – турă пани. Уроксене ачасем лайăх кăмăлпа çӳрени, предмета юратса вĕренни темрен те хаклăрах», – палăртрĕ Екатерина Михайловна. Вăл Чăваш Ен Пуçлăхĕн премине – 150 пин тенке – тивĕçрĕ.

**Алина ИЗМАН.**

ЮБИЛЕЙ

# Çемен Элкере асра тытса

Чăваш халăх поэчĕ, паллă çыравçă, драматург Çемен Элкер çуралнăранпа 120 çул çитрĕ. Вăл Йĕпреç районĕнчи Пысăк Упакасси ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă, пуçламăш шкул çеç пĕтернĕ. Пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăнса тыткăна лекнĕ, йывăр суранланнă. Питĕр тата Хусан госпиталĕсенче вăрах сипленнĕ. Шăпах çавăнта педагогсем хатĕрлекен курссенче пĕлĕвне тарăнлатнă. Киле таврăнсан тăван шкулта ачасене вĕрентме пуçланă. Унтан хаçат-журнал редакцийĕсенче, Чăваш кĕнеке издательствинче ĕçленĕ. Общество ĕçне йĕркелесе пынă. РСФСР Аслă Канашĕн депутатне нумай хут суйланнă. Сăмах май, Семен Васильевич 1915 çулччен Васильев хушаматпа çӳренĕ. Кайран Элкер /Орион çăлтăрлăха çапла калать чăваш/ хушма ята йышăннă.

Çемен Элкер граждан вăрçине халалланă пĕрремĕш сăввине 1917 çулта çырнă. Унăн «Хĕн-хур айĕнче» истори поэмине чăваш литературин ылтăн фондне кĕртнĕ. Вăл чăваш литературине çĕнĕ жанрсем – хроника романĕ /«Вутпа çулăм витĕр»/, истори романĕ /«Шурăм пуç килсен»/, драма поэми /«Вун саккăрмĕш çул»/ – кĕртнипе паллă. Çавнашкалах Семен Васильевичăн «Вăрçă кунĕсем», «Ирĕк çĕр-шывра», «Самана», «Хĕрлĕ çăлтăр», «Шĕнкĕл кайăк» тата ытти кĕнекине халăх юратса вулать. Унăн ĕçĕсене шкул программине кĕртнĕ, нумай чĕлхене куçарнă.

1964 çулта Çемен Элкер ятне Чăваш АССР Ĕç мухтавĕн тата Паттăрлăхăн Хисеп кĕнекине çырнă. Тепĕр 10 çултан журналистсен пĕрлĕхĕ ун ячĕпе республика премине çирĕплетнĕ. 40 çул хушшинче 96 çын лауреат йышне кĕнĕ.

Çак кунсенче литераторсемпе журналистсем, искусство çыннисем, ентешĕсем Çемен Элкерĕн вил тăприйĕ çине чĕрĕ чечексем хучĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**



# Уява хатĕрленет ветеран

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Кăмăллă мăшăрпа сыв пуллашса малалла çул тытрăмăр. Екатерина Харитонова вăрçă пуçланнă çул 16-ра пулнă. 1944 çула çĕвĕ мастерскойĕнче ĕçлекенскер патне вăрçа кайма повестка килнĕ. Унпа пĕрлех цехри тăвата хĕрĕн те ят тухнă: ыранах фронта тухса каймалла.

«Çул çинче тăршшĕпе макăртăмăр. Пире типĕ апат пачĕç. Эпĕ ăна çимерĕм, атте валли упрарăм. Канашра вăл ĕçлекен завода шыраса тупрăм. Аттепе нумай калаçса тăраймарăмăр, хыттăн ыталанса уйрăлтăмăр», – калаçрĕ ветеран.

Сĕнтĕрвăрри хĕрĕсене Чĕмпĕре радиотелеграфиста вĕренме янă. Виçĕ уйăхран, 1945 çулти нарăсра, Харитонова рядовой связист фронта кĕнĕ.

Фашистсене çапса аркатнă ырă хыпара вăл Германире илтнĕ. Аслă Çĕнтерӳ хыççăн çамрăк радисткăна яппун вăрçине янă. «Пире выльăх турттармалли вакунра илсе кайрĕç, вăл чӳречесĕрччĕ, хĕвел çути те кĕместчĕ. Çул çинче пынă чухне самолет сассине, снаряд çурăлнине илтрĕмĕр. Хĕрсенчен пĕрин кĕлĕ кĕнеки пурччĕ. Пурте мана: «Катя, вула», – терĕç. Тĕттĕмре курмастăп... Хамăр пĕлнĕ пек кĕлĕ каларăмăр. Тен, çакă та пире çăлса хăварчĕ? Пирĕн эшелон çине бомба пăрахма тытăнсан вакунран тухса чупрăмăр, сăрт-ту хушшинче пытантăмăр. Вилесем, аманнисемречĕ-речĕпе выртатчĕç...» – сӳтĕлчĕ аса илӳ çăмхи.

Маньчжурире хĕрсем яппун вăрçи çĕнтерӳпе вĕçленнине пĕлнĕ. Салтаксене киле яма хатĕрленĕ. Демобилизаци хыççăн Шупашкартан Сĕнтĕрвăррине çурран утма тивнĕ. «Киле çĕрле пырса кĕрес килетчĕ. Паллакансем курасран темшĕн шикленнĕ. Çар форминчен вăтаннă-ши? Эпĕ гимнастеркăпа, чĕр куççи таран юбкăпа, салтак аттипе таврăнтăм. Алăк урати урлă каççанах тумтире улăштарса тăхăнтăм. Чылайччен упрарăм ăна», – шухăша каять тĕрлĕ медале тивĕçнĕ ветеран.

Анна Иванова патне те çитрĕмĕр соцĕçченсемпе пĕрле. Паттăр хĕрарăм çинчен чылай ырă сăмах илтме тӳр килчĕ. Выçлăха, сивве, Ленинград блокадине тӳссе ирттернĕ Анна Ивановна, Беларуç, Украина, Польша çĕрĕсене ирĕке кăларнă çĕрте хутшăннă. Çĕнтерӳ çинчен Германири Галла хулинче пĕлнĕ вăл. Çакăнтах пулас мăшăрĕпе, вăрçă вутçулăмĕ витĕр тухнă Николай Ивановичпа, паллашнă.

Кашни ветеранăн – хăйĕн историйĕ, шăпи... Ватă çыншăн парнерен те ытларах тимлĕх, сума суни пахарах. Патшалăх пулăшăвне, çывăх çынсен чун ăшшине туйсах тăччăр вĕсем.

**Алина ИЗМАН.**

ВУТ-ÇУЛĂМ ВИТĔР

# Лачкасси паттăрĕсем



● ИВАН.

Игнатий Михайловичпа Пелагея Кононовна Игнатьевсем пилĕк ывăлпа икĕ хĕр çитĕнтернĕ. Каччăсем пурнăç çулĕ çине тăма пикеннĕ тапхăрта вăрçă пуçланнă. Пĕрин хыççăн тепри тăшманпа кĕрешме тухса кайнă. Ывăлсене юн тăкма çеç ӳстернĕ тейĕн çав. Тутăр сулса сыв пуллашакансене ашшĕ-амăшĕ епле чунпа ăсатнă-ши? Малалла пурăнма, тылра иртен пуçласа каçчен тар тăкма ăçтан вăй-хал çитернĕ-ши? Çĕре çыртса тăшмана ылханнă, куç шыçăниччен макăрнă, вăйран кайнă, çапах чăтнă халăх.



● ИВАН /ВАНЮК/.

«Асаннене ас тумастăп. Эпĕ çуралсан вилнĕ. Миша вырăнне Миша пулчĕ тесе каланă тет. Кĕреш юман пек 5 ывăлне вăрçă хирне ăсатнăскер пĕрмай йĕнине, турра кĕлĕ тунине тăвансенчен илтнĕ», – каласа кăтартать Михаил Васильевич, Василий Игнатьевăн ывăлĕ.

Лачкассине килекен çырусенче ашшĕ-амăшне чунтан хисеплекен ывăлсем Çĕнтерӳ кунĕ çитессе, фашистсене пуриншĕн те тавăрасса çирĕп шанса тăни çинчен пĕлтереççĕ, ватăсене çирĕп кăмăллă пулма хушаççĕ.

«... Эпĕ сывă! – çырать Миша Балтикăран. – Мĕншĕн мана текех кураймастпăр тесе йĕретĕр? Аннене калăр-ха, ахалех ан кулянтăр, куççуль ан тăктăр. Манпа нимĕн те пулман, тасасывă, йĕркеллĕ... Тăвансемпе курнăçаймăп текен шухăша тахçанах пуçран кăларса пăрахнă. Вăрă-хураха çапса аркататпăр, ун хыççăн тĕлĕнмелле çĕнĕ пурнăç тăвăпăр, пурте телейлĕ пулăпăр. Эсир Тăван çĕр-шыв чысĕшĕн тӳрĕ кăмăлпа çапăçакан пилĕк ывăл пăхса çитĕнтернĕшĕн мухтава тивĕçлĕ...» Кашни çырурах çапла лăплантарма тăрăшнă Миша ашшĕ-амăшне.

Вăрçă умĕн рабфакран тата Аçтăрхан хулинчи юхан шыв техникумĕнчен вĕренсе тухнă Михаил. Салтака кайма ят тухсан Балтикăна, шыв ай кимми çине, лекет. Питĕ савăнать çакăншăн. Вăл та халĕ пиччĕшĕ Павел пекех моряк. Часах вăрçă пуçланать. Шыв ай киммипе Балти тинĕсне пĕрре мар тухать. Нимĕççен 5 карапне путарнă çĕре хутшăнать. Перископ çĕмĕрĕлсен Миша троспа çыхăнса тинĕсе тухса ăна тӳрлетет. Вилĕмрен хăраман моряк пирки кимĕ командирĕ пулнă С.Лисин кайран çапла аса илет: «Вăл хăйĕн ĕçне лайăх пĕлетчĕ тата паттăр морякчĕ. Мĕн хушнине тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлатчĕ чăваш каччи. Вăрçă хаяр çулĕсенче совет çыннин, чăн-чăн патриотăн сăнарне яр-уççăн çирĕплетсе пачĕ».

Çырусенче те палăрать çакă. Вăл унта хăйĕн пурнăçĕ пирки мар, совет салтакĕн мĕнле пулмалли тата патриотизм пирки ытларах çырать.

«Совĕç пулмаллах çыннăн. Вăрçă хаяр кунĕсенче эсĕ мĕн турăн тесе ыйтсан эпĕ çапла хуравлăп: «Тăван çĕр-шывшăн çапăçрăм, халăх чысне мăшкăлланăшăн изуверсене тавăртăм. Тӳрĕ кăмăллă салтак пулни, çĕр-шыва паттăррăн хӳтĕлени – пирĕн чи аслă тивĕç».

Хастарлăхпа паттăрлăхшăн, çар тивĕçĕсене кăтартуллă пурнăçланăшăн Михаил Игнатьева 1942 çулхи çурлан 21-мĕшĕнче Ленин орденĕпе наградăланă.

Игнатьевсен çемйинче тĕлĕнмелле туслăх хуçаланнă. Çакă, паллах, ашшĕ-амăшĕнчен нумай килнĕ. 5 ывăлĕ пĕр-пĕриншĕн тĕслĕх пулнă. Çавна май шкулта та ăмăртса, «4» тата «5» паллăсемпе çеç вĕреннĕ. Вăрçă вăхăтĕнче те пĕр-пĕринчен уйрăлас темен. Пурте пĕр тăрăха лекнĕ. Пĕр çемьерен пиллĕкĕн Ленинграда хӳтĕленĕ. Михаил Балти флотĕнче тăракан Павелпа тата Василипе темиçе те курнăçнă. Иванпа, Ванюкпа çыру çӳретнĕ. Пĕррехинче, похода каяс умĕн, чи кĕçĕннипе Василипе тĕл пулать. Миша хальхинче питĕ салхуллă пулнине асăрхать тăванĕ.



● ПАВЕЛ.

– Нимĕн те пĕлме çук, тăшман хаяр. Çапах та эпир çапса аркататпăрах, çĕнтеретпĕрех. Эпир вăйлă халăх. Енчен те эпĕ чĕрĕ юлаймарăм пулсан пĕрремĕш ывăлна ман ята хур, Василий. Эсĕ таврăнаймасан эпĕ сан ятна хурăп, – тет юлашки тĕл пулура. Чунĕ сиснĕ-ши мăнтарăнăн. Сыв пуллашаççĕ, шел те, ĕмĕрлĕхех.

Çĕнтерӳ кунне кĕтсе илеймест Миша. Оланд утравĕсенчен инçех мар путать вĕсен шыв ай кимми. Мал ĕмĕтлĕ, пĕрмай тăнăç пурнăç пуçланасси пирки çыракан 24-ри каччăн пурнăçĕ тăрук татăлать. Çап-çамрăкла. Юратса курмасăр, çемье телейне, ăшшине туймасăр.

Михаил вилни çинчен калакан çырăва ялти почтальон ашшĕне – Игнатий Михайловича – вутă çурнă вăхăтра пырса тыттарнă. Мăшăрне каламасть, чăтать Игнатий Михайлович. Ывăлĕ вилни çинчен калакан çырăва турăш кĕтессине пытарать. Хĕрĕ Анна Мăн кун умĕн пӳрт çума пуçтарăнать, тăрук çыру асăрхать те амăшне кăтартать. Михаил вилни çур çул та иртнĕ ун чухне…

Иван Игнатьев – çемьере чи асли. Вăл та Ленинграда хӳтĕленĕ. Тинĕс-çар пехотин связисчĕ вăрçăри хура-шура нумай курнă. Пысăк çапăçу хыççăн тăххăрăн çеç тăрса юлсан кăкăр таран çăтакан шурлăхсенче, снарядсемпе, минăсемпе, бомбăсемпе арканнă вăрмансенче çӳресе партизансене шыраса тупнă. Каллех хĕрӳ çапăçăва кĕнĕ. Йывăр аманнă. 1943 çулхи нарăсăн çурринче Анат Тагилри госпитальрен таврăннă хыççăн нумаях та пурăнаймасть вăл, хĕне кайса çĕре кĕрет. Çав кунах аслă хĕрĕ те пурнăçран уйрăлать.

Ванюк вăрçа каяс умĕн Шăхасанти шкулта малтан директорăн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумĕнче, кайран директорта тăрăшнă. Пултаруллă педагог, хастар учитель тăван çĕр-шывшăн йывăр кунсем çитсен пĕр шухăшласа тăмасăр вăрçă хирне тухса кайнă. Ленинград хулине хӳтĕленĕ çĕре хутшăннă. Çав вăхăтра ывăлĕ Валерий тин çеç çут тĕнчене килнĕмĕн. Ăна ача çуратмалли çуртран илсе таврăнма, пĕчĕк чăмăрккана кăкăрĕ çумне тытса ăшшăн çупăрлама ĕлкĕрет ашшĕ. 33 çулти Тинĕс-Çар пехотин рота аслă политрукĕ ывăлĕн телейĕшĕн, ирĕклĕхшĕн, çутă малашлăхшăн пуçне хурать. Ăна Лядны районĕнче 1942 çулхи çĕртмен 22-мĕшĕнче пытарнă. 5 ывăлран чи малтан ĕмĕрлĕхех куç хупаканни Ванюк пулнă.

Павел Игнатьев вăрçăччен Лăпкă океан флотĕнче çарта тăнă. Кайран Улатăрти педагогика техникумĕнчен вĕренсе тухса учительре ĕçленĕ. Вăрçă пуçлансан 28 çулти яш пиччĕшĕсенчен юлас темен. Хĕрлĕ Ялавлă Балти флотĕнче тăшман карапĕсене аркатать. Шăллĕшĕн Мишăшăн тавăрать. Яла сывă таврăнать. Тăван тăрăх, колхоз йăлт юхăннине кура учитель шкула мар, пĕрремĕш кунранах ял хуçалăхне тухса утать. Трактористра ĕçлет. Юратнă професси хăй еннех туртать çав. Павел Игнатьевич Хусан университетĕнчен вĕренсе тухать, çав вăхăтрах Чӳкçырминчи шкулта директорăн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумĕнче, кайран Тăрмăшри тата Тăвайри шкулсенче директорта, Тăвай районĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ. Канаш районĕнчи Шаккăлта, кайран Канашри пĕр шкулта директор çумĕнче тăрăшнă.



● МИХАИЛ.

Василий Игнатьев – çемьере чи кĕçĕнни. 1940 çулта çара кайнă вăл. Часах вăрçă пуçланнă. «Строгий» эсминец çинче комендор-зенитчик пулнă Василий. Ленинграда хӳтĕлесе 874 кун хушши Новосаратовка поселокĕ таврашĕнчи çапăçусене хутшăннă. Блокада вăхăтĕнче нимĕç авиацийĕ эсминеца тĕп тăвас тĕллевпе час-часах бомбăсем пăрахнă. Карап йĕри-тавра 100-150 метрта 450 снарядпа авиабомба çурăлнă. Тăшман артиллерийĕ 150 хутчен тупăсенчен персе шыва путарма тăнă, анчах «Строгий» парăнман. 1945 çулхи Нева юхан шывĕ çинчи çар парадне хутшăннă.

Карап экипажĕн паттăрлăхĕнче Василий Игнатьевич комендорăн тӳпи те пысăк. Командир Лачкассине янă çыру ывăлĕнче – Михаил Игнатьевра – халĕ те упранать. «Хисеплĕ Игнатий Михайлович! Эпĕ Сире Василий ывăлăра çитĕнтернĕшĕн чунтан тав тăватăп. Вăл паттăррăн çапăçать, нимĕç çĕленĕсене куççульшĕн, хĕн-хур кăтартнăшăн тата йывăр хуйхă кӳнĕшĕн вăйлăн тавăрать», – çырнă унта.

В.Игнатьева Нахимов медалĕпе, «1941-45 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн», «Ленинграда хӳтĕленĕшĕн» медальсемпе наградăланă. Сакăр çултан тăван яла таврăнать Василий Игнатьев. Авланса çемье çавăрать. Ывăл çуралать. Пиччĕшĕ Михаил каланине пурнăçлать, ывăлне унăн ятне хурать.

Василий Игнатьевич вăрçă хыççăн «С-7» кимĕ командирне, Совет Союзĕн Геройне, Аслă тинĕс-çар училищин преподавательне С.Лисина шыраса тупнă. Пиччĕшĕ Михаил путнă экипажран тăвата çын çеç сывă юлнăмĕн: Александр Оленин, Василий Субботин, Валентин Куница, Сергей Лисин. Пуринпе те тĕл пулса калаçнă Василий Игнатьев. Пиччĕшĕн Михаилăн пурнăçĕн юлашки саманчĕсене ыйтса пĕлнĕ.

Василий Игнатьев ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайни 17 çул çитнĕ кăçал. Лачкассинчи çурта ывăлĕсемпе хĕрĕсем пушă ларма памаççĕ, пĕрин хыççăн тепри кайсах тăраççĕ. Ашшĕн вĕлле хурчĕсене халĕ Михаил пăхать. Пĕр тăван моряксем çуралса ӳснĕ кил-çуртри вучаха сӳнме парасшăн мар вăл.

Финн заливĕ хĕрринчи сăрт çинче халĕ те ӳсет кĕрнеклĕ тирек. Ăна Хĕвел анăçĕнче вăрçă вĕçленсен Василий Игнатьев комендор чăваш паттăрĕсене – вăрçăра пуçне хунă пиччĕшĕсене – асăнса лартнă. Хăватлă хумсен шавĕ çулçăсен çепĕç кĕвввипе пĕрлешсе Балтика çапăçăвĕсенче пуç хунă, анчах тăшмана парăнман моряксене халалланă паттăрлăх гимнĕ евĕр янăрать.



● ВАСИЛИЙ.

**Елена АТАМАНОВА.**
Тăвай районĕ.

ЭПИР ÇЫРНĂЧЧĔ



### Мĕн кĕтет çынсене?

«Шанхайра» пурăнакансенчен чылайăшĕ канăç çухатнă. «Малашлăх çинчен шухăшласах ыйхă çĕтрĕ», – теççĕ çынсем. Çав вăхăтрах хăшĕпĕри хăнк! та тумасть. Аркату хумĕ ку тăрăха пырса çапмасть тейĕн. «Эпир кар! тăрăпăр та хамăрăн çурт-йĕре çĕмĕрме памăпăр», – палăртса хунă хайхисем. Вĕсен ят-шывне пĕлесшĕнччĕ – каламарĕç.

# Малашлăх çинчен шухăшласа ыйхă çухатнисем

**2012 çулхи çу пуçламăшĕнче Шупашкарти Мясокомбинат тăкăрлăкĕн 7-мĕш линий урамĕнче пурăнакансем пирĕн пата пулăшу ыйтса çырнăччĕ. Аса илтеретĕп, маларах «поселок» тенĕ çак вырăнта çынсем 40 çула яхăн пурăнаççĕ. Хăмаран çапса тунă «засыпушкăсем» вырăнне капмар пӳртсем çĕкленĕ вĕсем. Анчах çурт-йĕре те, çĕре те харпăрлăха куçарма ирĕк памаççĕ. Ку ыйтупа халăх тĕрлĕ инстанцие çитнĕ. Çав вăхăтра «Лидер» организаци, аукционра çĕнтерпĕ май, Калинин районне кĕрекен Эгер бульварĕпе, Ленин комсомолĕн урамĕпе, Машина тăвакансен тăкăрлăкĕпе чикĕленекен лаптăка çĕрпе тикĕслеме палăртнине, унтан çак вырăнта нумай хутлă çуртсем хăпартма йышăннине асăннăччĕ. Висĕм çулах гаражсене илме пуçланăччĕ ĕнтĕ. 19,25 гектар çĕр çинче кĕç-вĕç пĕрремĕш никĕс яма хатĕрленетчĕç. Çакăнта тĕпленнĕ халăха ăçта вырнаçтарассине кăна уçăмлатайманччĕ ун чухне. Пирĕн хаçатра «Шанхай» «партизанĕсем», е Çынсен шăпине кам çырать?» статья пичетленнĕренпе нумай шыв-шур юхса кайрĕ. Вулакансем лару-тăрупа кăсăклансах тăнăран çивĕч çак ыйтăва тепĕр хут çĕклеме тĕв турăмăр.**

### Влаç çыннисен хăш хуравне ĕненмелле?

Икĕ çул каяллах, статья çырма пуçличчен, Шупашкар хула администрацине çырупа тухнăччĕ, хайсем тĕллĕн çĕкленĕ çуртсенче пурăнакансен шăпине татса пама ыйтнăччĕ. «Шупашкар Хула депутачĕсен Пухăвĕ 2004 çулхи раштавăн 8-мĕшĕнче тата 2005 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче çирĕплетнĕ Шупашкар тĕп планĕпе, çĕрпе усă курмалли тата çурт çĕклемелли йĕркепе килĕшӳллĕн çак лаптăк промышленноç предприятийĕсен санитарипе хӳтлĕх зони шутланать. Унта уйрăм çурт хăпартма юрамасть...» – ăнлантарнăччĕ пире. Çĕре маларах аукцион урлă сутни, «Лидер» организаци ытларах укçа пани пирки пĕр сăмах та каламан. Çакна мĕн сăлтавпа пытарнă-ши? Тĕрĕссипе, пулас микрорайон проекне ун чухнех шыраса тупнăччĕ, хаçатра пичетленĕччĕ. «Санитарипе хӳтлĕх зонине» аукционра мĕнле саккунпа килĕшӳллĕн сутнă? Ăнланмалла мар...

Татах Шупашкар хула администрацийĕпе çыхăнма лекрĕ. Промышленноç предприятийĕсен санитарипе хӳтлĕх зонинче çурт çĕклеме ирĕк пур-и вара? Шупашкар хула администрацийĕн архитектура тата хула строительстви енĕпе ĕçлекен пуçлăх çумĕ Денис Майоров алă пуснă çыруран çакă паллă: 19,25 гектар лаптăк çинче строительство пуçласси çинчен администраци 2011 çулхи раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнче «Лидер» организаципе килĕшӳ тунă. Çак документра палăртнă тăрăх, «Лидерăн» хăйсем тĕллĕн хăпартнă çуртсенче пурăнакансене хăтлă кĕтеспе тивĕçтермелле. Пурăнмалли çурт-йĕр кодекс йĕркине пăсма юраманни çине пусăм тунă. Унсăр пуçне халăха темиçе ăстрăмпа куçармаллине çирĕплетни пирки те асăннă çырура. Çакна уçăмлатмашкăн «Лидер» организаципе çыхăнма сĕннĕ. Кама, ăçта миçе тăваткал метр лаптăкпа тивĕçтерессине халăхăн, паллах, пĕлес килет. Çакăн тавра организацин строительство директорĕпе Алексей Лапшинпа калаçасшăнччĕ. «Лидер» ĕçченĕсем пуçлăх командировкăна кайнă терĕç, ыйтусене электрон çырупа ярса пама хушрĕç. Алексей Юрьевичăн хуравĕсемпе хаçатăн çитес номерĕсенчен пĕринче паллаштарăпăр.

### Пĕрремĕш çурт никĕсĕ

«Лидер» организаци массăллă информаци хатĕрĕсем урлă «Кувшинка» микрорайонта пая кĕрсе хваттер туянма май пуррине пĕр вĕçĕм аса илтерет. Мĕнех, вырăнĕ лайăх. Нумай хутлă çуртсенче пурăнма килĕшекенсем те хальччен тупăннă ахăр.

Гаражсем вырăнĕнче пĕрремĕш çурт никĕсне янă ĕнтĕ. Çулталăк пуçламăшĕнчех ĕçе пуçăннă строительсемшĕн – хĕрӳ вăхăт. Карта тытнă вырăнтан шăв-шав илтĕнет. Тӳпенелле кармашакан крансем ĕçлени курăнать.

«Шкапри черккесем те пĕр-пĕринпе перĕнсе сасă кăлараççĕ», – тет стройкăран 30 метрта пурăнакан Зинаида Ильина. 2007 çултанпах çĕре харпăрлăха куçараймасăр хăшкăлать хĕрарăм. Çаплипех шанăçа çухатмасть, ваккат тытма укçа шеллемест вăл. Çитес вăхăтра унăн ĕçне черетлĕ хут судра пăхса тухĕç.

Унччен эпир унпа «Лидер» организацине çитсе килме палăртрăмăр. Сăмах май, çурт лартакансене Зинаида Ивановна хăйĕн документĕсен копийĕсене паман. Вĕсен условийĕсене йышăнманнине пĕлтерет çакă.

### Кам хӳтĕлĕ?

2012 çулта пĕр пӳлĕмре вырнаçнă организаци юлашки вăхăтра вăй илнине кашниех асăрхĕ. «Шанхайра» пурăнакансен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен специалиста шыраса тăваттăмĕш хута хăпартăмăр. Коридорти стена çинчи «Кувшинка» микрорайон проекчĕ хĕех мăнаçлă курăнать. Унта палăртнă тăрăх, çак лаптăкра 3883 хваттер хута кайĕ, 6500 ытла çын хăтлăхра пурăнĕ. Çавнашкалах канупа спорт вырăнĕсене çирĕплетнĕ. Ача сачĕ те, шкул та пулĕ. Хальхинче ку çуртри кашни хутри пӳлĕмсене «Лидер» организаци йышăннине курса тĕлĕнтĕмĕр. Кур-ха: пĕр пӳлĕмрен ăçта çити ӳссе çитнĕ! Çурт-йĕр çĕклесси тупăшлă курăнать...

«Манăн та, икĕ ачан та прописка пур. Пире çĕнĕ çĕрте мĕн пысăкăш хваттер тивĕçĕ?» – калаçăва пуçларĕ ĕмĕр тăршшĕпе тенкĕ çумне пус хушса пуçтарнă укçапа йăва çавăрнă Зинаида Ильина. Ахальтен мар унăн çурчĕ кермен пекех мăнаçланса ларать, пахчинче темĕн тĕрлĕ çырла çитĕнет.



«Сирĕн çемьене 30 тăваткал метр уйăрса парăпăр», – ăнлантарать «Лидер» ООО представителĕ. 2012 çулта йĕркеленĕ пухура та пĕрне пĕчĕк хваттер, теприне пӳлĕм лекесси пирки каланăччĕ.

Çынсене 5 ăстрăмпа куçарма палăртнине пĕлтĕмĕр. Ильинсене иккĕмĕшне кĕртнĕ.

«Пропискăсăррисене кам хӳтĕлĕ? Вĕсене пурăнмалли вырăнпа тивĕçтерĕç-и?» – ĕç-пуçа уçăмлатас килчĕ пирĕн. «Вĕсен тĕлĕшпе ыйту татăлман», – пулчĕ хурав. Зинаида Ивановна документсене илсе килменнине пĕлсен пирĕнпе сыв пуллашма васкарĕç.

«Карта хысĕнче хамăн çуртрах хăварĕç-и тен?» – шӳтлесе те, пăшăрханса та калаçать тивĕçлĕ канури хĕрарăм. Çапах шанăç çухатманни вăй парса тăрать ăна. Сăмах май, тĕрĕслĕх шыраканскер хăйĕн çемйи пурăнакан лаптăк чиккине Çĕр кадастрĕнче шута илтернĕ. Çакă ку вырăна хула карттине кĕртме май парать.

«Эпир çакăнти çуртра пĕрле пурăнма пуçланăранпа 10 çул та иртрĕ. Ялта атте-анне патĕнче пропискӑра тăратпăр. Уйрăлса тăван килсене таврăнмалла-и пирĕн?» – чун ыратăвне пайлать çăмăл машинăпа килсе чарăннă мăшăр. Чăнах, арăмĕпе упăшкине уйрăм кĕтеспе тивĕçтерессие иккĕленӳллĕ.

Ивановсем, тĕслĕхрен, 24 çул каялла çурт илнĕ. Унтанпа çĕнетнĕ, хăтлăлатнă ăна. Мăшăр икĕ ача çуратса ура çине тăратнă. Вĕсем те малашне пĕр пӳлĕмлĕ хваттерте хĕсĕнсе пурăнасшăн мар.

Кондратьевсен çемйи укçа хушса пысăкрах хваттер илме хирĕç мар. Пĕччен пурăнакан Елизавета Захаровăна пĕр пӳлĕмли чух кăна. Çавăнпах кăмăлсăрланнине кăтартмарĕ вăл.

Семеновсен çемйи пысăк. Халĕ кил хуçипе арăмĕ, икĕ хĕрĕ, икĕ мăнукĕ валли вырăн çителĕклех. «Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн пире висĕ пӳлĕмлĕ хваттерпе тивĕçтермелле», – çине тăрать кил ăшшине упракан.

### Ача çуратма хăрамаççĕ

Пĕр ушкăна пуçтарăннă çынсем унталла-кунталла хутлакан палламан çамрăкка тӳрех асăрхарĕç. Кама шырать вăл? «Лидер» представителĕ Сергей Иванов ĕçпе çӳрет иккен. Строительство организацине документ леçсе паманнисемпе курса калаçасшăн. Хăй каланă тăрăх, унашкалли – 90 çемье. Вĕсен май пур таран хăвăртрах «Лидерпа» çыхăнмаллине аса илтересшĕн. Çамрăк пирĕнпе сăмах вакласа тăмарĕ, хăйĕн çулĕпе вĕçтерчĕ.

«Лидер» организаци хăш-пĕр çемьепе килешӳ тăвасшăн, çавăнпах кил хуçисене çу уйăхĕн 25-мĕшĕччен офиса пыма ыйтать», – хыпар илсе çитерчĕ çыру валеçекен арçын. Çак çемьесем уççи-хуппине тупма пулăшасса шаннăччĕ, анчах нихăшĕ те чĕннĕ çĕре кайма васкамасть.

Кăçал строительство организацийĕн представителĕсем Раиса Павловăна пĕр районта 30-50 пин тенкĕпе пӳрт илсе пама сĕнсе пăхнă имĕш. Анчах пĕччен пурăнакан хĕрарăм вĕсен условийĕпе килĕшмен. Ватлăхра ăçта кайĕ вăл?

Мясокомбинат тăкăрлăкĕнчи 7-мĕш лини урамĕнчи çамрăк çемьесем демографи кăтартăвĕсене лайăхлатма тăрăшни куç кĕрет. Ашшĕ-амăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ пĕчĕккисемпе уçăлса çӳренине сăнама кăмăллă. Нумайăшĕ ача кӳми тĕксе утать. Эх, канлĕх кăна туптăрччĕ ĕнтĕ çакăнти халăх!

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.
Т.ПЕТРОВА коллажĕ.



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Пĕвер салачĕ

**250 грамм треска пĕверĕ, 150 грамм сыр, консервланă 1 банка симĕс пăрçа, пуçлă 1 сухан, пĕçернĕ 3 çăмарта, пĕçернĕ 1 кишĕр, майонез, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Çăмартана, кишĕре, сыра теркăламалла. Сухана вĕттĕн турамалла. Салата сийлесе /треска пĕверĕ – сухан – кишĕр – симĕс пăрçа – çăмарта – сыр/ хумалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле. Ăна 2-3 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

### Какайпа, сырпа

**2 çĕр улми, 250 грамм чăх какайĕ, 1 хăяр, 1 пан улми, çур апельсин, 100 грамм сыр, 5 хура слива, пуçлă 1 сухан, 1 лимон сĕткенĕ, хăймапа майонез, тăвар кирлĕ.**

Çĕр улмипе какая пĕçермелле. Çавракан туранă сухана лимон сĕткенĕпе маринадламалла. Вĕттĕн туранă çимĕçсене суханпа, тăварпа, майонезпа хăйма хутăшĕпе пăтратмалла.

### «Чĕререн» хăпарту

**300 грамм чăх чĕри, 1 кишĕр, пуçлă 1 сухан, пĕçернĕ 100 грамм рис, 100 миллилитр сĕт, 50 грамм майонез, 50 грамм хăйма, 2 шăл ыхра, 150 грамм сыр, 2 çăмарта, 2 татăк батон, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Чĕрене, ыхрана – вĕттĕн, кишĕре – пĕрчĕлесе, сухана çурма çавракан турамалла. Чĕрене тип çупа ăшаламалла, кишĕрпе сухан хушмалла. Çак хутăша çатмана ямалла. Çиелтен теркăланă сырăн çур пайне сапмалла. Рис ямалла.

Сĕте майонезпа, хăймапа, çăмартапа, ыхрапа пăтратмалла. Унпа риспа чĕрене витмелле.

4 пая каснă батон татăкĕсене тип çупа ăшаласа çатмана хумалла. Çиелтен сыр сапмалла. Хăпартăва 30 минутлăха духовкăна лартмалла.

### Кĕсел

**3 стакан сĕт, 2 апат кашăкĕ какао, 2 апат кашăкĕ крахмал, 3 апат кашăкĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ ванилин, мăйăр кирлĕ.**

Какао çăнăхне сахăрпа, ванилинпа хутăштармалла. 2 стакан сĕте вĕретмелле, какао хушмалла. Крахмала сивĕ сĕтпе пăтратмалла. Çак хутăша вĕрекен какаопа хутăштармалла, 5 минут вĕретмелле. Кĕселе вĕтетнĕ мăйăрпа илемлетмелле.

### Çĕр улми икерчи

**1 килограмм çĕр улми, пуçлă 2 сухан, 3 çăмарта, тăвар, чĕптĕм апат соди, 2-3 апат кашăкĕ çăнăх, 200 грамм сыр, тип çу кирлĕ.**

Çĕр улмине, сыра теркăламалла. Сухана вĕттĕн турамалла. Çĕр улмине суханпа, 1 çăмартапа, тăварпа, сахăрпа, апат содипе, çăнăхпа пăтратмалла. Сыра 2 çăмартапа хутăштармалла.

Çĕр улми чустине кашăкпа илсе çатмана ямалла, çиелтен сыр хумалла. Икерче ылтăн тĕс çапиччен ăшаламалла.

### Сĕтри мойва

**500 грамм мойва, 100 грамм услам çу, пуçлă 1 сухан, 200 грамм сĕт, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Мойва ăшне кăлармалла. Ăна услам çу ирĕлтернĕ çатмана хумалла, вĕтетнĕ сухан, тăварпа пăрăç ямалла. Пулла вăйсăр çулăм çинче 10 минут пăшăхламалла. Унтан вĕрекен сĕт ярса тепĕр 5 минут пĕçермелле.

### Редиспа, суханпа

**200 грамм редис, 3 пан улми, 50 грамм симĕс сухан, 200 грамм сельдерей тымарĕ, 50 миллилитр тип çу, 1/2 чей кашăкĕ сахăр, 30 миллилитр пан улми уксусĕ, 1/2 лимон сĕткенĕ, тăвар, петрушкăпа çу çырли кирлĕ.**

Хуппинчен, вăрринчен тасатнă пан улмине тăваткалласа касмалла. Çиелтен лимон сĕткенĕпе уксус хутăшĕ ямалла. Редиса – çаврашкан, сельдерей тымарĕпе симĕс сухана вĕттĕн турамалла. Çимĕçсене тип çупа пăтратмалла, тăварпа сахăр сапмалла. Салата çу çырлипе, петрушкăпа илемлетмелле.

## ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Салтак тӳми



**Мана нимĕнле кĕл чечек те кирлĕ мар. Эпĕ ачаран юр пек шурă шултра салтак тӳмине /ромашка/ юрататăп. Халĕ ăна хамăн пахчара çитĕнтерме шухăшларăм. Вăрăран ӳсет-ши вăл е калча туса лартмалла-ши?**

**ВЕРА.**
Çĕрпӳ районĕ.

Салтак тӳмине çу уйăхĕн вĕçĕнче е çĕртме пуçламăшĕнче акмалла. Унăн вăрри питĕ вĕтĕ, çавăнпа та çиелтен çĕрпе кăштах кăна хупламалла. Чечек калчаран та лайăх çитĕнет. Тăватă-пилĕк çулçă кăларсан икĕ-виçĕ салтак тӳмине пĕрле илмелле, пĕр-пĕринчен 40 сантиметртра лартмалла. Çу тăршшĕпе чечексем пĕр пысăк тĕме çаврăнаççĕ, кĕр енне çурăлаççĕ. «Аляска» сорта кĕркунне те акса хăварма юрать.



# Кишĕр акакана

Кишĕр вăррине мĕнле акмалла? Хăш-пĕр пахчаçă ăна хăйăрпа хутăш сапать. Мана вара кĕсел пулăшать. Ăна крахмалтан хатĕрлемелле. 1 чей кашăкĕ кишĕр вăррине 1 стакан кĕселпе пăтратса чейнике ямалла. Йăран çине йĕр тумалла, ăшă шывпа шăвармалла, чейникри кишĕр вăрриллĕ кĕселе ямалла. Ăна çĕрпе хупламалли çеç юлать. Кишĕр кашни çулах лайăх шăтса тухать.

# Хăяр ăнса пулĕ

Манăн пахчара хăяр та ăнса пулать. Пĕчĕк вăрттăнлăха усăми? Акиччен вăрра кăкăр çинче ăшăтмалла. Çакăн витĕмне хăшĕпĕри ĕненмĕ. Эпĕ вара тахçантанпах çак мелпе усă куратăп, сире те тĕрĕслесе пăхма сĕнетĕп.

Каçхине вăрра пир-авăр пусмапа чĕркесе йĕпетмелле те полиэтилен çатăркана чикмелле. Çак чĕркене кăкăр çыххи ăшне хурса çывăрма выртмалла.

Хăяр хăвăртах шăтать. Кӳршĕри арçынсем те çулленех вăрра ăшăтса пама ыйтаççĕ.

# Сухан аван шăтĕ

Сухан вăрри акасси те ним те мар маншăн. Вĕтĕскерсене çăвара чиксе кăштах шыв сыпмалла. Кайран пĕрĕхсе кăлармалла. Йăран çинчи вăрра çĕрпе хупламалла та сухан шăтасса кĕтмелле.

**Светлана МАРКОВА.**

# Пахчара... Çырлара...

**Çĕр çырли вĕтелчĕ. Çĕнĕ, шултра йышши сортсем лартас килет. Мĕнли лайăххах-ши?**

**Л.ПЕТРОВА.**
Шупашкар районĕ.

Çĕр çырлине пăхма та пĕлмелле. Ĕçĕ калама çук нумай. Вăхăтра çĕнетмелле, куçарса лартмалла. Типĕ çанталăкра шăварсах тăмалла, унсăрăн çырли вĕтĕ пулать.

«Королева Елизавета» сорта уйрăмах ырлаççĕ. Çырли питĕ тутлă, шултра. Пан улми пысăкăш çырла тепĕр чухне 100 грамм та таять. Пĕр тĕпрен 1 килограмм çурă таранах пухса илме май пур.



Çавăн пекех «Гигантелла Макси», «Брайтон», «Жемчужница», «Эльвира», «Хоней», «Альбион», «Любава» – шултра сортсем.

## КАЙĂК-КĔШĔК

# Цесарка туянасчĕ

**Кăçал цесарка туянасшăн. Анчах та мĕнле пăхмаллине, ăçта усрамаллине пĕлместĕп.**

**Людмила.**
Канаш районĕ.

Цесаркăна пăхма йывăрах мар. Вăл та чăх чĕппи апатнех çиет. Малтанхи кунсенче чăмăрла пĕçернĕ çăмарта памалла. Каярах рациона сĕтпе пĕçернĕ вир пăтти /шĕвĕ ан пултăр/ хушăр. Вĕренĕ шыв ĕçтерĕр. Кашни икĕ сехетрен апатлантарни лайăххах, анчах та нумай памалла мар. Цесарка кăвакал пек çăтма юратать, çавăнпа та çитерес умĕн пĕсехине тĕрĕслĕр. Вăл чылай чухне тулса ларать, çавна май апат ирĕлесси пăсăлать.

Япăх çанталăк пирки цесаркăсем урама тухаймаççĕ пулсан ешĕл курăк ытларах татса парăр. Ăман, хурт-кăпшанкă тавраш кирлĕ вĕсене. Урайне пĕр сий хăйăр сапăр, кайăк-кĕшĕк унпа «çăвăнма» юратать. Ултă эрнеччен сĕтпе пĕçернĕ пăтă çитерсен аван. Кунне пĕр хутчен апата вĕтетнĕ çăмарта хуппи хушăр. Пысăкланнăçемĕн извеç тавраш хăйсемех тупса çиеççĕ. Ултă эрне хыççăн кунне пĕр хутчен кăштах вир сапса парăр. Икĕ уйăх çурăран цесаркăсем хурт-кăпшанкăпа тăранса пурăнма тытăнаççĕ, симĕс курăк çиеççĕ. Лартса панă апата тепĕр чухне тĕкĕнмеççĕ те.



## ТĔКĔР УМĔНЧЕ

# Симĕс маскăсем

**Пахча çимĕçпе ешĕл ӳсен-тăранран темĕн тĕрлĕ маска та хатĕрлеме пулать.**

### Типĕ ӳт валли

Вĕлтĕренĕн 5-6 çулçине вĕтетсе тӳмелле, çур стакан вĕри шыва ярса 4-5 минут вĕретмелле. Шыва сăрăхтармалла, ăшă вĕлтĕрене пит çине хумалла, 10-15 минут тытмалла.

### Çуллă ӳт валли

Икĕ апат кашăкĕ кăшкар утин вĕтетнĕ çулçине пĕр çăмарта шуррипе тата пĕр чей кашăкĕ лимон сĕткенĕпе пăтратмалла. Хутăша пите сĕрмелле, 10-15 минутран ӳте симĕс чейре йĕпетнĕ мамăкпа сăтăрса тасатмалла.

### Ӳт ватăласран

Петрушкăпа укропа вĕтетмелле, пĕр апат кашăкĕ олива çăвĕ тата пĕр чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ ярса пăтратмалла. Хутăша питпе мăя вунă минутлăха сĕрмелле. Ăшă шывпа çумалла.

### Ӳт тĕсне илемлетме

Пĕр апат кашăкĕ теркăланă хăяра пĕр чей кашăкĕ пылпа хутăштармалла. Пите сĕрмелле, вунă минут тытмалла.



КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Кӳршĕсем те ăмсанаççĕ

Хапхаран темиçе хут тухса пăхрăм – юратнă мăшăр ĕçрен килни курăнмасть. Телефон тытмасть-ха вăл. Кампа тата ăçта мĕн шыраса çӳрени паллă мар. Юлташĕсемпе çырма хĕрринче лараççĕ ахăр. Çур литр эрех илнĕ ĕнтĕ. Унсăр мĕнле? Вĕсем анчах ывăнаççĕ вĕт. Кун пек чухне йĕтĕр хатĕрлесе хумалла-и-ха? Ăса вĕрентме... Анчах вăрçă-харçă ырри патне илсе çитермест. Тен, урăхла майпа алла илме пулĕ ăна? Чим, тахçан малтан ачасем итлемесен васкамасăр 10 таран шутлаттăм. Лăпланмашкăн нумай вăхăт та кирлĕ мар иккен.

Çырмаран хăпараканни манăн упăшка мар-и? Ай-уй, сулăна-сулăна каять. Варанланса пĕтнĕ. Карттусне çухатнă. Аллинчи сумкине сĕтĕрсе пырать. "Пĕрре, иккĕ, виççĕ..." – ăшра шутласа ăна хирĕç утрăм. Кӳршĕсем карта урлă пăхаççĕ, арăмĕпе упăшки вăрçăнма пуçласса кĕтеççĕ. Çук вара, хальхинче тӳлевсĕр шоу кăтартмăп. Хамăн арçынна пилĕкĕнчен ыталаса киле çитертĕм. Çул тăршшĕпе ăна темиçе хут тĕксе ярас патнех çитрĕм. Пули-пулми сăмахлать те. Юратьха хама алла илме пултартăм. Çитет кӳршĕсене хамăртан култарса. Тепĕр тесен, мĕншĕн сасă хăпартса калаçмалла пирĕн? Ачасене çитĕнтернĕ, çурт хăпартнă, çăмăл машина илнĕ. Укçа пур, выльăх, чăх-чĕп тытатпăр.

Мăшăрăм апатланмасăрах выртса сывăрчĕ. "Лайăххах çав вăл манăн. Ав пĕчченех мĕнешкел мунча çĕклерĕ. Хальхи йышши кăмака турĕ – унашкалли ялĕпе те çук", – картишĕнче утнă май кăмăлăма çавăрма тăрăшатăп.

Çĕрле тăрса ан çӳретĕр тесе ун кравачĕ патне пĕр курка шыв лартса патăм. Манăн упăшка урăх кама кирлĕ-ши?



Тепрехинче кил хуçи каллех ӳсĕр килчĕ. Тем килĕшмерĕ ăна – эпĕ пӳртре кĕштĕртетнĕ вăхăтра машинăна тапратса тухса тарчĕ. Тусан вĕçнине çеç курса юлтăм. Йĕрке хуралçисем тытса чарасран та хăрамасть мăнтарăн. Урам хушшинчи çул та тансĕр-тĕнсĕр. Хăйне те, çĕнĕ машинăна та шел. Хăвала са çитсен-и? Вăй çитерсен-и?.. Унта пулсан та хĕрарăмсăр вĕçне-хĕрне тупма çук. Паллах, ун хыççăн тухса утма лекрĕ. Инçех каймĕха. Ял хĕрринчи лавкка умĕнче чарăннă пулинех. Ĕçлеме ӳркенекенсем çавăнта кунĕн-çĕрĕн хурал тăраççĕ – укçаллисене эрех илсе памасăр ирттермеççĕ. Манăн упăшка хытă çын мар, хайхисене енчĕкне те кăларса тыттарма пултарать. Шухăшланă пекех лавкка патĕнче хăвала са çитрĕм ăна. Шăпах укçа шыраса тăратчĕ. Нухратне те шăлавар, те кĕпе кĕсйине чикнĕ ĕнтĕ? "Пĕрре, иккĕ, виççĕ..." – йăпшăнса пытăм ун патне. Кăшкăрса тăкас вырăнне куçĕнчен пăхса йăл култăм. Карма çăварсем ĕç-пуç мĕнлерех аталаннине сăнама пуçларĕç. Эпĕ вĕсене нумай кĕттермерĕм – упăшкана мăйĕнчен ыталаса хыттăн чуп туса илтĕм. "Атя, чунăм, киле", – терĕм аллинчен тытса. Итлерĕ мана. Машинăпа чăш! кăна хапха умне çитсе лартăмăр.

Упăшка телефон тытмасăр тарăхтарать. Çак тĕнчере унăн манран тата ачисенчен хаклăрах çын пур-и? Апла тăк кирлĕ те мар вăл ăна. Усăсăр япалана мĕн тума йăтса çӳрет тулькках? Мăшăрăн карас телефонне чул çине персе çĕмĕрме шухăш тытрăм. Алла çӳлелле çĕклесе сулса янăччĕ çеç – ĕçе вĕçне çитерме тем чарчĕ. "Пĕрре, иккĕ, виççĕ..." – шалти сасă пĕр вĕçĕм шутлани каллех тăна кĕме пулăшрĕ. Мĕн хăтланатăп-ха эпĕ? Кайран пур пĕрех çĕнĕ телефон илмелле пулать-çке. Укçана мĕншĕн çилпе вĕçтерес? Ун вырăнне пахчана хитре чечек илсе лартас. Ав кӳршĕсенех темĕн тĕрли те пур – пăхса ытармалла мар.

Упăшкана тахçантанпах сивĕ сăмах каласа кӳрентермен. Чун çунтармăш куç умĕнчех улшăнчĕ: ĕçрен вăхăтра таврăнакан пулчĕ, сăлтавсăр ĕçмест, килти хуçалăха тытса пыма пулăшать. Халĕ иксĕмĕр чуп-чуп уйăхĕнчи пек пурăнатпăр. Карта урлă сăнакан кӳршĕсем те пире ăмсанаççĕ. Çемье пурнăçне хамăрăнах йĕркелесе пымалла. Эх, эп – телейлĕ хĕрарăм!

**Елена ЦВЕТКОВА.**

ЮРАТУ ÇИНЧЕН – САВĂЛАСА

Зоя СЫВЛĂМПИ

## Савнă мăшăрăм

Савнă мăшăрăм, эп тав тăватăп сана
Манăн пурнăçăмра эс пурришĕн.
Пĕрмаях йăпатмашкăн пĕлнишĕн чуна,
Пĕр сăмахсăр мана ăнланнишĕн...

Сахал мар ĕнтĕ курнă кун-çул нушине,
Çын тени вăл нушасăр çӳрет-и?
Тем пулсан та, упратăн çемье ăшшине,
Эсĕ – унăн хăвачĕ, тĕрекĕ...

Ачасемшĕн тата мăнуксемшĕн ялан
Ырă тĕслĕх çеç пирĕн пуласчĕ.
Тупăнсах тăтăр юрăхлă ĕç ик алла,
Сывлăхпах малалла пурăнасчĕ...

Хисеплесчĕ, упрасчĕ çапла пĕр-пĕрне,
Кирлĕ чух каçарма та пĕлесчĕ.
Кĕмĕлпе сапмасан та шăпамăр йĕрне,
Яланах пурнăçпа киленесчĕ.

АХ, АНЧАХ...

# Ахаль мар . . .

Ку пурнăçра нимĕн те ахальтен мар иккен. Ĕçрен ывăнса килнине пăхмасăрах каç енне сĕт илме тухрăм. Урамра сивĕсивĕ. Лавкка аякра пирĕнтен, утмалăх пур. Хама мĕн кирлине илнĕ хыççăн кассăна черете тăтăм. Халăх нумай. Уяв сывхарса пынă май – пушшех те. Лавккаран тухса пыраттăм, такам пырса пиçиххирен туртрĕ. Çаврăнтăм та – студент чухнехи савни. Пĕччене х. Ман пекех вăл та сĕт илме тухнă иккен. Аякра мар пурăнать кунтан. «Эсĕ пĕртте улшăнман!» – терĕ куçран ачашшăн пăхса. Лавккаран тухнă çĕре тĕттĕмленме те ĕлкĕрнĕччĕ. «Атя ăсатса хăваратăп», – тесен хирĕçleme пултарайма рăм. Утрăмăр майĕпен. Манăн ниçта та васкамалли çук. «Алена, çавăн чухне ăнсăртран манпа калаçма пăрахнине паянхи кун та ниепле ăнланаймастăп», – шăп пынă хыççăн сăмах хушрĕ Саша.

Унтанпа чылай çул иртнĕ ĕнтĕ. Саша ман тантăшăмпа пĕр ялтанччĕ. «Мĕн çӳретĕн çавăнпа, колхоза çаратса пуйрĕç те, халь ашшĕ-амăшне никам та юратмасть», – тесе халтан яратчĕ Надя. Сăмахĕсене хăлхана чикменнишĕн тарăхатчĕ тантăшăм. Вăл килсен те вĕчĕрхенетчĕ. Пирĕн туслăхшăн вахтерша кăна хĕпĕртетчĕ. «Туйăра чĕнмесен те пырса ларатăп», – тетчĕ шӳтлесе. Юриста вĕренекен Саша лăпкă та ырăччĕ. Эрех ĕçекен, туртакан каччă мар. Çавăнпа пурте килĕштеретчĕç ăна. Саша хуларан аякра пурăннине пăхмасăрах тăрук кашни эрнерех яла кайма пуçларĕ. Сăлтавне каламастчĕ мана. Тĕрĕссипе, ыйтман та унран. Надя вара пĕррехинче ялтан килчĕ те: «Пĕлетĕн-и, улталать сана Саша, унăн урăххи пур, ача та кĕтет теççĕ. Сана вара суйса пурăнать. Эх, тăмсай та эсĕ», – терĕ. Ĕнентĕм. Куç шыççăнса кайиччене х йĕтĕм. Надя лăплантарас вырăнне тата вăйлăрах вут хучĕ. Саша килчĕ. Эпĕ унран нимĕн те ыйтса тĕпчемерĕм. Питĕ салхуллăччĕ вăл. «Апла тĕрĕсех, икĕ вут хушшинче ку, çавăнпа нимĕн тума пĕлмест. Чĕри çунать пуль», – шухăшларăм ăшра. Сашăна тавăрмашкăн ман валли Надя çĕнĕ савни, хăйĕн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшне, тупса пачĕ. Ăна ятарласа чĕнсе илтĕмĕр. Кинона тухса утнине Саша курса юлчĕ. Хамăн чĕре çунса тухатчĕ. Кинотеатрта та савниçĕм пирки кăна шухăшларăм. Игорьпе калаçас та килмерĕ, тĕрĕссипе, унăн хăйĕн хĕрĕ пурччĕ. Общежити умĕнче сыв пуллашнă хыççăн эпĕ ăна урăх курман та. Саша манпа калаçми пулчĕ, тĕл пулсан та курмăш туса иртсе каятчĕ. Надя пирĕн юрату арканнишĕн калама çук савăнчĕ. Пытармастчĕ те. Сашăн юлташĕсенчен кайран тин тĕрĕссине пĕлтĕм. Нимĕнле савни те, ача кĕтекен те пулман иккен унăн. Амăшĕ йывăр чирленĕ. Ашшĕ пĕрмай ĕçре. Йăмăкĕ-шăллĕне хĕрхенсе кашни эрнерех яла вĕçтернĕ.



Мана вара килти пирки нимĕн те калас темен. Каçару ыйтма шухăшларăм. Саша итлесшĕн те пулмарĕ. «Санăн урăххи пур, часах качча тухатăн теççĕ, манпа вара вăхăт ирттерме çеç çӳренĕ. Ман сана курас та килмест», – терĕ те çаврăнса утрĕ. Йĕрсе юлтăм.

Тинех куçăм уçăлчĕ. Вăт тантăш. Самантра чăл-пар аркатса тăкрĕ Надя. Хăй 20 çула çитсе те никампа çӳресе курманнишĕн ăмсаннă иккен мана. «Пур пĕрех çапăçтаратăп, пĕрлешме памастăп», – тесе каланă пĕрле вĕренекенсене. Эпĕ, айванкка, нимĕн те пытармастăмччĕ унран.

Çурт тĕлне çитрĕмĕр. «Хăнана чĕнместĕн ĕнтĕ мана. Упăшку Игорь кĕвĕçет пуль», – терĕн эсĕ алăран тытса. Куçсем тĕл пулчĕç. «Çук нимле Игорь те, пулман та», – тенине Саша малтан ĕненесшĕнех пулмарĕ. Надя мĕн каласа сивĕтнине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа кăтартрăм. «Халĕ те пĕччене х сан тантăшу, кам çумне кăна çулăхса пăхмарĕ-ши? Анчах та никам та качча илесшĕн мар курăнать», – терĕ Саша ассăн сывласа.

Каçартăмăр пĕр-пĕрне. Чĕрере тахçан хĕмленнĕ чăн-чăн юрату темиçе çул иртсен те сӳнмест иккен. Шартлама сивве пăхмасăр лавккана иксĕмĕр те сĕт туянма ахальтен тухман иккен çав каç. Пирĕнтен телейли те çук халь. Çак таранччен унсăрăн епле пурăннă-ши эпĕ? Сашăна тĕл пулнă кунранпа утса мар, вĕçсе çӳретĕп. Халь тин пире никам та уйăраймĕ.

**Алена ЛЕНСКАЯ.**



*Иван МЕДВЕДЕВ*

# Улăхри кăвак чечек

**/Повеç сыпăкĕ/**

**/Малалли. Пуçламăшĕ 13-17-мĕш номерсенче/.**

– Вăрçăра Якурпа пĕрле çулталăк çӳрерĕмĕр, – анăçалла тинкерсе пуçларĕ сăмахне капитан. – Çав тери пултаруллă командирччĕ Якур. Фронта кайсанах, Курскпа Орел пĕккинчи çапăçусенчех, палăрчĕ вăл хăйĕн взвочĕпе. Çакăншăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăларĕç. Днепр таврашĕнчи çапăçусенче хамăрăн рота командирне йывăр амантсан ун вырăнне Якура çирĕплетрĕç. Бобруйск таврашĕнче наступлени пуçланас умĕн ăна капитан званине пачĕç, батальон командирĕ туса хучĕç. Паттăрлăхшăн виçĕ ордена тивĕçрĕ вăл. Якур мĕнлерех вилни пирки вара сана тĕплĕн çырса пĕлтертĕм. Çырăва илтĕн пулĕ?

– Илтĕм. Ăна илсен минтерĕм миçе уйăх йĕпенмерĕ-ши? Эх, çав каç Мускава мĕншĕн вĕçсе кайман-ши Якур? Академие вĕренме кайнă пулсан чĕрех юлатчĕ вăл.

– Якуршăн – Тăван çĕр-шыва чунтан парăннă патриотшăн – тăшмана çапса аркатасси пĕрремĕш вырăнта тăратчĕ. Академире вăрçă хыççăн вĕренме ĕмĕтленчĕ. Эпĕ те батальон командирне çитрĕм те, вăрçăра сывă юлнă пулсан Якур халĕччен полка ертсе пымалли çынччĕ. Вилес умĕн Якур сана пурнăçран та хытăрах юратни пирки каласа хăварчĕ. Ывăлăрпа сан патна чĕрĕ таврăнайманнишĕн каçару ыйтрĕ. Илюк ӳссе çитĕнсен пирĕн пекех çар офицерĕ пуласси пирки ĕмĕтленетчĕ вăл...

Павăл каласа панине итленĕçемĕн çамрăк хĕрарăмăн сăн-пичĕ кĕрхи пĕлĕт евĕр тĕксĕмленсе пычĕ, пуçне усса асаплă шухăшсен тыткăнне кĕчĕ. Якур çинчен аса илни Анна чĕрине çĕнĕ ырату кӳнине, унăн чунĕнчи пăлханчăк туйăмсем таканари шыв евĕр чӳхеннине туйса Павăл калаçу çăмхине малалла сӳтме тăхтаса тăчĕ. Темиçе минут шăп тăнă хыççăн Анна ерипен пуçне çĕклерĕ те шывланнă куçне саппун вĕçĕпе сăтăрса илчĕ.

– Тавах сана Якур çинчен каласа панăшăн, – терĕ Анна. – Кайса çуламха, хĕвел те самаях анчĕ.

– Анна, кăштах тăхтаса тăрсамччĕ, – куçĕнчен хĕм сапрĕ йĕкĕт. – Пурнăç малалла пырать, чĕррисен пурăнмалла... Кайăксем те мăшăрлă пурăнаççĕ. Качча тухсамччĕ мана, Анна. Эпĕ сана ĕмĕрĕпех алă çинче çĕклесе çӳрĕп. Тепĕр виçĕ кунтан Мускава çар академине вĕренме тухса каятăп, унта çемьеллисене общежитире уйрăм пӳлĕм параççĕ. Анна, манăн мăшăрăм пулсамччĕ. Тархасласах ыйтатăп. Ыран ял канашĕнче çырăнăпăр та каçхине тăвансене пухăпăр.

– Павăл, ан çиллен эсĕ мана... – йĕкĕтĕн калас сăмахне пат! татрĕ Анна. – Эпĕ... тепĕр капитана юрататăп.

– Ăнлантăм... Анчах вилнĕ çынна – Якурăн тăпри яланах мамăк пекех çăмăл пултăр – чĕртсе тăратма май çук вĕт-ха...

– Якур манăн чĕрене ĕмĕрлĕхех чĕрĕ çын пек вырнаçса юлнă. Халĕ те, вăл тепĕр тĕнчене куçнă пулсан та, ăнах юрататăп. Ĕнер тĕлĕк куртăм. Якур, офицер формине тăхăннăскер, аллине эпĕ юратакан утмăлтурат чечекĕсен çыххине тытнăскер, ман паталла чупать. Эпĕ те ун патнелле васкатăп. Пĕтĕм тавралăх юмахри пек хитре те çап-çутă курăнать. Эпир пĕр-пĕрин патне çывхарса-çывхарса пыратпăр пек. Вăл мана ăшшăн ыталаса илчĕ те пуç çийĕн чечек çыххине сапаласа пăрахрĕ. Эпĕ ĕмĕрĕпех пĕччен пурăнасса, ватălса вилсен чунсем пĕрле пуласса систерчĕ пулĕ ĕнерхи тĕлĕк. Каçар, Павăл, чĕрем никама та йышăнмасть, ăна хистеме пултараймастăп. Çитменнине, манăн тăваттăри ача та пур.

– Ывăлу хам ача вырăннех пулĕ. Хамăр та çуратăпăр-ха ачасем, Анна.

– Сана нихăш енĕпе те тиркеме çук, Павăл. Анчах мана никам та кирлĕ мар.

– Мăшăрлă пурăнма чылай лайăхрахçке, Анна. Эсĕ, хитрескер, пурнăçна хăр-тăлăххăн ирттерме кама мĕн айăп тунă-ха? Манăн юратнă мăшăрăм пулма, улпут майри пек пурăнма килĕшсемччĕ, Анна. Килĕшсен халех каялла çаврăнатпăр та тăрантаспа каятпăр. Утă тесен... Вăл миçе лав кирлĕ, çавăн чухлĕ туянса килĕпĕр лесничествăран. «...Павăл, хӳтлĕхсĕр ан хăвар вĕсене: Аннăна качча ил...» – аса илчĕ çак самантра капитан Якур вилес умĕн каланă сăмахсене. Анчах ку сăмахсене Анна шыв çийĕн сенĕкпе çырни, нимле шанăç та çуккине кура, вĕсене юриех хăй шухăшласа кăларни вырăнне хурса йышăнассинчен сыхланса, Якурăн халалне чĕре тĕпне упрама хучĕ Павăл. Çитменнине, çак халала çунат пама хăтланни Анна чунĕнче çĕнĕ юрату çулăмне чĕртме пулăшайманнине, ăшпилсĕр калаçăва Якурăн вилĕмсĕр ятне кĕртсе, çамрăк хĕрарăм умĕнче хăйĕн офицер чысне тĕксĕмлетсе хăварма пултарнине те ăнланчĕ Янтушкин.

– Каçар, Павăл, эпĕ санпа пыраймастăп...

– Юлашки хут калатăп сана: пыратăни манпа?! – хĕрӳлленчĕ капитан. – Авă куратăн-и, тăрантас çинчи аслă конюх шăпах пире кĕтсе ларать.

– Каçар, Павăл, санăн мăшăру пулаймастăп, мĕншĕн тесен Якура манаймастăп...

– Ну, юрĕ эппин, – сассине йăвашлатрĕ капитан. – Амăшĕ пĕтмесен хĕр пĕтмест теççĕ. Ялта хитре хĕрсем татах та пур. Çитсенех шырама пуçлатăп.

– Телейлĕ пул, Павăл. Мана çиллен-се ан пурăн.

– Мĕншĕн çилленес сана? Чăн-чăн юрату ĕмĕрлĕхе теççĕ. Çакна паян хам курса ĕнентĕм. Ну, сывă пул, эппин, Илюкпа иксĕрĕн яланах сывлăхпа пурăнмалла пултăр.

– Санăн та.

Павăл çаврăнчĕ те çырă çӳçне аллипе шăлса тирпейленĕ май пуçне кăштах усса, тарăн шухăша путса васкамасăр тăрантас патнелле утрĕ.

Васса çавра питлĕ калушĕпе шурă чăлхине хывса, ăшă шыва шеплеттерсе, шурă кĕпин аркине çĕклесе çырма çыранĕпе пĕрлешсе каякан вар пуçне утса кĕчĕ. Лапаткине çава çийĕн каллĕ-маллĕ шутарса хăйрасан çӳллĕ те çара ӳсекен хăмăша кăшăрт-кăшăрт кастарса, çырма еннелле çулса кайрĕ. Шыв çумĕнчех ӳсекен çыранри çăра курăка хыттăн сулăнса çулнă вăхăтра çава вĕçĕ чанк! туса илчĕ. Çавана сиенлеме пултаракан япалана тупса шыва вăркăнтарас тесе пĕр утăм ярса пуссанах ура айĕнчи çĕре кисрентерсе темĕн сирпĕнсе кайрĕ... «Ах!» терĕ те Анна, хырăмне икĕ алăпа ярса тытса, пĕкĕ евĕр авăнса ларчĕ. Пӳрнисен хушшипе симĕс хăмăша хĕрлĕ тĕспе пĕветсе вĕри юн шăпăртатрĕ.

– Ах, Якур, май пулсан санăн вилес умĕнхи ыратăвун çуррине хама илĕттĕмччĕ теттĕм те... Ăна пĕтĕмпех илме пӳрчĕ иккен, – çĕр çине тăсăлса выртса вăйсăррăн пăшăлтатрĕ Анна. – Ĕнерхи тĕлĕкре Якурпа ахальтен пĕрле пулмарăмăр иккен...

– Мĕн пулчĕ, Анна? – хашкаса чупса çитрĕ Васса.

– Такам ... фронтран илсе килнĕ гранатине кунта килсе пăрахнă пулмалла, – сăмахсене тата-тата тытăнчăклăн калаçрĕ Анна. Юн нумай юхнă май, унăн хĕрлĕ сăн-пичĕ пурă пек шуралса-шуралса пычĕ.

– Кам та пулин пур-ши ку таврашра, сана хăвăртрах больницăна ăсатмалла вĕт-ха, – ним тума аптраса, пĕр вырăнта тĕпĕртетме тытăнчĕ тантăшĕ. Унтан, кăштах тăна кĕрсен, хăйĕн чĕнтĕрлĕ саппунне Васса васкавлăн салтса илчĕ те унпа Аннăн хырăмне çыхса хучĕ. Юн çав-çавах сăрхăнса тухнă май тантăшĕпе хăйĕн тутăрĕсемпе те çавăрса çыхрĕ.

– Такам хăйĕн аллине чиксе пăлхатнăн пĕтĕм ăш-чик туртса ыратать, – хут пек шуралса кайнă тутине аран-аран хускатса шăппăн калаçрĕ Анна. – Ах, вăй пĕтĕмпех пĕтсе çитрĕ, пуç вăрман евĕр кашлать, ӳсĕр чухнехи пек çаврăнать, хăсас килет, куç умĕнче пин-пин кĕмĕл 
 ункă йăлтăртатать... – Якур, ах, Якур, юратнă çыннăм... Аллине кăвак чечексен çыххине тытнăскер, вăл васкавлăн ман паталла утса килет авă... Тинех пĕрле пулатпăр иккен...

– Кам та пулин пур-и кунта!!! – хыттăн кăшкăрса ячĕ те Васса, вар тăррине чупса хăпарчĕ. Пĕр-икĕ минутранах каялла хашăлтатса анчĕ. – Павăл тăрантаспа шалтăртаттарса каялла килет-ха. Чăт кăштах, Анна, часах больницăна илсе каятпăр сана. Анчах та тантăшĕ çурăм çинче пĕр хускалмасăр тата сывламасăр выртнине курсан «Анна!» тесе хыттăн кăшкăрса ячĕ те ун пуçĕ умне пырса кукленсе ларчĕ, утмăлтурат чечекĕ пек кăвак куçĕн хупаххисене пӳрнипе ерипен сĕртĕнсе хупса хучĕ. Хаклă тантăшĕ хăйĕнчен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнине тинех пĕтĕм ăс-тăнĕпе ăнланса илнĕскер Васса Аннăн сивĕнсе пыракан ӳт-пĕвĕ тавра чупкаласа йĕме тытăнчĕ.

– Мĕн пулса иртнĕ кунта?! – чупсах анчĕ Павел Янтушкин. – Тем сирпĕннине илтсе каялла çаврăнтăмăр.

– Анна такам пăрахнă граната тĕлне лекнĕ, – чĕтревлĕн ĕсĕкле-ĕсĕкле хуравларĕ Васса.

Халĕ çеç çулса пăрахнă паккуссен хушшинче, шăнкăртатса юхакан çырмари шывран çур метр пек çӳлеререх шăтăк курсан капитан йывăррăн сывласа илчĕ.

– Пехотăна хирĕç кĕрешмелли граната çурăлса кайнă иккен, – терĕ вăл Аннăн хускалми ӳчĕ умĕнче карттусне хывса. Йĕкĕт чĕр куççи çине лап! ларчĕ те çамрăк хĕрарăмăн шурса кайнă аллине хăйĕн кăкăрĕ çумне тытса шăппăн-шăппăн ĕсĕклерĕ. «Пĕрремĕш юратăвăм, ытарайми чиперукăм...» – типсе кайнă тутине йывăррăн хускатса пăшăлтатрĕ илемлĕ сăн-питлĕ офицер.

Капитан кăштах лăпланса ура çине тăчĕ те айккинче выртакан çавана аллине илсе ăна васкамасăр та тĕпчевлĕн сăнаса пăхрĕ.

– Граната унки çава вĕçне лекмен, – ăнлантарчĕ Вассăна капитан. – Лекнĕ пулсан та пĕр вырăнтан теприне кăна куçса ларĕччĕ. Апла пулсан... граната ункăсăр пулнă. Çар комиссариатне шута тăма кĕрсен пĕр офицер мана вăрçă вăхăтĕнче пирĕн ял çывăхĕнчи варта çĕрле дезертирсем канма чарăнни, вĕсене хыçалтан йĕрлесе пынă пĕчĕк отряд çывхарма пуçласан лешсем çырма урлă каçса вăрманалла тарса ӳкни, тепĕр район территорийĕнче таркăнсене пур пĕрех тытни пирки каласа пачĕ. Дезертирсем отряд еннелле шăпах çак вырăна граната вăркăнтарса хăварнă пулас.

**/Малалли пулать/.**

**САВĂ СĔВЕМĔ**

# Ял варринче – шап-шурă палăк

Ял варринче – шап-шурă палăк,
Хĕп-хĕрлĕ çăлтăр тăрринче.
Тĕлĕнмелле хитре çанталăк,
Илемлĕ-çке çу кунĕнче.

Курсам: чечек те кунта хунă...
Вулаççĕ сăвă тăрăшса.
Çак уява шăп вуннăн тухнă...
Тăратпăр – ячĕшĕн кăна.

Ятарласа кунта кам килнĕ?
Е лавккана, е çула май.
Теприн анийĕ пиçсе çитнĕ...
Паян вара – тăххăрмĕш май!

Паян вара – Çĕнтерӳ кунĕ!
Чи-чи телейлĕ кĕтнĕ кун!
Паян тăшманăн тухнă чунĕ,
Тек тăкăнман çĕр çине юн.

Паянхи кун тĕнче кĕрленĕ
Савăнăçпа та хуйăхпа.
Пĕри – ташланă, тепри – йĕнĕ
Йăваланса, чуна çурса...

...Ветерансем сăмах калатчĕç,
Çынсем утатчĕç уява.
Сăмах илетчĕç, пуç таятчĕç
Паттăрсене сума суса.

Мĕн чухлĕ çамрăк выртса юлнă...
Мĕн чухлĕ чун çуралайман!
Мн чухлĕ терт, мĕн чухлĕ хуйхă
Çынна ураланма паман.

Çĕр-шывăм сарлака та анлă,
Ун халăхĕ тупа пĕр тан.
Пĕр чăмăр пулнă, чăмăртаннă!
Пире çĕнтерейми тăшман.

Мĕн-ма паян çакна манатпăр?
Мĕн-ма чунсем ытла кăра?
Уяв сумне те пит туймастпăр.
Юлмастпăр мар-и парăмра?

Кашнин ĕç пур... Вĕсен те пулнă.
Вĕсен те тапнă чун-чĕри!
Ачи те, арăмĕ те юлнă,
Куляннă, çуннă çав тери.

Ял варринче – шап-шурă палăк.
Ытарма çук таврашĕнче.
Тăмастпăр-çке кунта пĕр талăк –
Ма тухас мар вăхăтĕнче?

Каласчĕ ыр сăмах вĕсемшĕн,
Пуçа тайма ма вăтанас?
Пуласлăхри çут ĕмĕтсемшĕн
Чун-чĕререн çеç тав тăвас!

Хускалнă кар! çĕр-шыв чĕнсессĕн
Чăваш çынни – ятне яман!
Çулсем иртсен, кунсем çитсессĕн
Тав тăвĕç кашнине ятран.

**Елена ФОМИНА.**
Тăвай районĕ.

ПУЛАТЬ ВĔТ!

# Тĕнчери чи çирĕп 12 амăшĕ

**Анне тесенех хăтлă çурт ăш-чикĕ куç умне тухать, тутлă кукăль шăрши сăмсана кăтăклать. Анчах та хĕрарăм тени пурте пĕр мар. Пĕри ырă та çепĕç кăмăлĕпе уйрăлса тăрать, тепри – çирĕплĕхĕпе. "Çирĕплĕх" тени те ытла та çемçен илтĕнет-ха хăш чухне. Тепĕр амăшĕ, ачисене /çав вăхăтрах – хăйне те / лайăх пурнăçпа тивĕçтерес тесе, тискер кайăкран та хăрушăрах хаярланать… Чăн та, иккĕмĕш ушкăнра та палăртнине пурнăçлас тĕллевпе тĕрĕс, мирлĕ меслетсемпех усă куракансем пур.**

**1. Олимпиада, Александр Македонский амăшĕ**



Александр Македонский историе чи пултаруллă çар пуçĕсенчен пĕри пулса кĕрсе юлнă. Вăл йĕркеленĕ патшалăх çĕрĕсем Вăта çĕр тинĕсрен пуçласа Гималай тăвĕсем таранах сарăлнă. Хăюлăхĕ арçынна, ахăртнех, амăшĕнчен куçнă.

Александрăн амăшĕ Олимпиада унăн ашшĕн тăваттăмĕш арăмĕ пулнă. Тĕлĕнмелле те, çак хĕрарăм ячĕ историре начар сăмахпа кăна упранса юлнă. Плутарх историк çырса хăварнă тăрăх, хĕрарăм, хăйĕн тĕн ĕненĕвне пăхăнса, çĕленсемпе пĕрле çывăрнă..

Александрăн ашшĕ тата тепĕр хут авланса Клеопатрăна качча илсен Олимпиада хăй ирĕкĕпех тухса кайнă. Каялла вăл упăшки вилсен кăна таврăннă. Усал чĕлхесем калаçнă тăрăх, тискер ĕç çак хĕрарăм хутшăнмасăр иртмен-мĕн… Пĕрре çĕкленнĕ алă тепрехинче те чĕтренмĕ. Историксем çырса хăварнине ĕненес тĕк, Клеопатрăпа унăн кăкăр ачине вĕлерни çĕре те Олимпиада тӳрремĕнех хутшăннă. Трон еткерçи пирки хирĕçӳллĕ лару-тăрăва çапла татса панă хĕрарăм. Юнлă историсем çакăнпа та вĕçленмеççĕ-ха. Тискер тепĕр ĕçе те çак ятпах çыхăнтарççĕ – II Филипăн ывăлне те, III Филипа, Олимпиада хушнипех наркăмăш парса вĕлернĕ иккен.

Пенсильванири король колледжĕн историкĕ Брайан Павлак палăртнă тăрăх, Олимпиадăн хаярлăхĕпе шелсĕрлĕхне çапах та пĕр иккĕленӳсĕр çирĕплетме çук. Историре йĕр хăварнă хĕрарăмсем çинчен темшĕн тăтăшах çапла калаççĕ – хаяр та вĕсем, шелсĕр те… Мĕнле хура кушак чупса кайнă-ши Олимпиадăпа Македони регенчĕ Антипатр тата унăн ывăлĕ Касандр хушшинче /Александр çак вăхăтра вăрçăсенче çӳренĕ, тĕнчене парăнтарнă/? Хĕрарăмăн шелсĕр политикиех ура хунă-ши – паллă мар. Анчах та хирĕç-тăру вăйлансах пынă. Юлашкинчен Касандр çарĕ Олимпиадăна ярса тытнă, пирĕн эрăччен хи 316 çулта хĕрарăма вĕлермелли приговор йышăннă. Çапла вара хăйĕн паллă та чаплă ывăлĕ хыççăн тата 7 çул кăна пурăннă Олимпиада.

**2. Клеопатра, Египет патша майри**



Египет патша майри амăшĕ пулса тăман тăк, тен, влаçшăн çавăн пекех кĕрешмĕччĕ те… Унăн Юлий Цезарьпе тата Марк Антонипе хутшăнăвĕсен, ачисем хĕрарăма политикăра вăй, çирĕплĕх панă. Çавăнпах Римра та пĕлтерĕшлĕ пулнă çак хĕрарăмăн сăмахĕ. Хăйĕн çĕр-шывĕнче вара, Египетра, ирĕклĕнех хуçаланнă вăл. Анчах та, темĕнле вăйлă пулсан та, Клеопатра хĕрарăм вĕт-ха, апла ăна трона сыхласа хăвармашкăн арçын ача кирлех. Вăл Цезарь ывăлне Цезариона суйласа илнĕ. Пирĕн эрăччен хи 44 çулта Клеопатра çак тĕллевпе тата тепĕр усал ĕç пурнăçлать – шăллĕне наркăмăш парса вĕлерет. Виççĕри Цезарион çапла Египет официаллă патши пулса тăрать. Паллах, çĕр-шыв тилхепи унăн амăшĕ аллинче юлать.

Хĕрарăм трона 22 çул йышăннă хыççăн 39 çула çитсе вилет. Унăн вилĕмĕ хыççăн Рим Египетпа пĕрлешет. Цезариона вĕлереççĕ. Клеопатра Марк Антонирен çуратнă виçĕ ачине çăлма май килет. Клеопатрăн хĕрĕ Селена королева пулса тăрать.

**3. Ву Зетиан, Китай пĕртен пĕр патша майри**



Ву Зетиан пĕтĕм йĕркене пăснă. 630-мĕш çулсенче вăл, çула çитмен çамрăк, Китай императорĕн Тайцзунăн наложници пулса тăнă. Патша вилсен хĕрарăма, йĕркепе килĕшӳллĕн, будда мăнастирне ямалла пулнă. Унта унăн, йăлайĕрке çапла хушать, мĕн юлашки сывлăшĕ тухичченех пурăнмалла. Анчах та Ву саккуна пăхăнма шухăшламан та – вăл императорăн ывăлĕн Гаозонгăн наложници пулса тăрать. Çакăнтан пуçланать те трон çулĕ.

Ву икĕ ывăл ӳстерет. Унăн хĕрне вĕлернĕ тесе императорăн хĕсĕр арăмне айăплать. Историксенчен нумайăшĕ вара усал çак ĕçе Ву хăех тунă тесе ĕнентерет.

Патша сывлăхĕ хавшасан Ву татах та ытларах вăй илет. Арçын ĕмĕрлĕхех куçне хупсан çĕр-шыв тилхепине Ву хăй аллине ярса илет, тăлăх патша майри тата регент пулса тăрать. 690 çулта хĕрарăм татах йĕркене пăсать – трона хăйĕн харпăрлăхне çавăрса унпа пĕчченех хуçаланма тытăнать. Ун умĕн те, хыççăн та суверенлă тата никама пăхăнман çĕр-шыв пек Китая урăх пĕр хĕрарăм та ертсе пыман.

Ыттисемпе танлаштарсассăн, çак хĕрарăма инкеклĕ шăпа кĕтмен. Пĕтĕм йĕркене пăсса пĕтернĕ пулин те ăна никам та вĕлермен. Ву 82 çула çитиччен влаçа алăран вĕçертмен. Йывăр чирлесен кăна виççĕмĕш ывăлне еткерлĕхпе куçать трон. Çакăн хыççăнах хĕрарăм ĕмĕрлĕхех куçне хупать.

**4. Екатерина Медичи, виçĕ король амăшĕ**



Франци виçĕ королĕн амăшĕ Екатрина Медичи малтанах ăнăçу тутине ас тивсех кайман-ха. Франци принцĕпе пĕрлешнĕскер малтанхи вăхăтра вăл маргинал рольне кăна выляна – упăшки урăххине юратнă, çавăнпа саккунлă арăмĕ хăть те хăш самантра "саккунсăр" тăрса юлма пултарнă…

Анчах вăхăт иртнĕ. 10 çултан Екатерина пĕр ывăл хыççăн теприне çуратма пуçланă. Упăшки II Генрих вилсен унăн пĕр ывăлĕ, 15 çула çитнĕскер, трона йышăннă. Анчах та çулталăкран вăл та вилнĕ. Çапла влаç иккĕмĕш ывăлне IX Карла куçнă. Екатерина вара регент пулса тăнă.

Екатерина Медичи Франци тилхепине алла илнĕ вăхăтра çĕр-шыва вĕçĕмех граждан тата тĕн вăрçисем силленĕ. Хĕрарăм пирки политикăри гений теейĕмĕн, çапах та вăл çĕр-шыв, хăй тата ачисем валли лайăххине питĕ нумай тунă. 1572 çулта IX Генрих католик геноцидла утăмпа палăрнă – вăл Париж хапхине хупма, килсе çитнĕ пин-пин протестанта вĕлерме хушнă. Историре Çеттуй Варфоломей каçĕ ятпа кĕрсе юлнă çак пулăм хыççăн ывăлĕ амăшĕ умне чĕркуçленнĕ, çылăхĕсемшĕн тата хĕрарăмăн синкерлĕ пулăмпа вараланнă ячĕшĕн каçарма йăлăннă. Çапах та хĕрарăмăн авторитечĕ çирĕп пулнă-ха. Виççĕмĕш ывăлĕ те, III Генрих, ăна хăйĕн канашçи пулма ыйтнă.

Историксем палăртнă тăрăх, Екатерина Медичи ăсĕпе виçĕ ывăлĕнчен те ирттернĕ – лешсем шухăшламасăр тунă йăнăшсемпе ытларах палăрнă.

**5. I Изабелла, Испание пĕрлештернĕскер**



Америка историне вăл Христофор Колумб çул çӳревĕн спонсорĕ пек кĕрсе юлнă. Унсăр пуçне вăлах Испание пĕрлештерес енĕпе нумай тăрăшни паллă. Хĕрарăм хăй аллине куçса юлнă Кастилия королевствине чĕркуççи çинчен çĕкленĕ. Çак тĕллевпе уголовлă реформа ирттернĕ, малтанхи ертӳçĕ – хăйĕн пиччĕшĕ – хăварнă парăмсемпе татăлнă.

Халĕ ăна нумайăшĕ йăл кулăпа кăна аса илет. Анчах та Изабелла хĕрхенме пĕлмен çын пулнă. Унăн стратегийĕн пĕр пайĕ католицизмпа çыхăннă – урăх ниме́нле тĕн пирки те илтесшĕн те пулман вăл.

Мăсăльмансемпе еврейсене йывăр килнĕ – вĕсен е тĕнне улăштармалла пулнă, е çĕр-шывран тухса тармалли кăна юлнă. 1480 çулта Изабеллăпа унăн мăшăрĕ, тĕллевне пурнăçа кĕртес тесе, Испани инквизицине пуçарнă. Çав вăхăтрах хĕрарăм ултă ачине воспитани парса ӗлкĕрнĕ.

**6. Мария Тереза, вĕреннĕ, анчах та воспитани илмен**

Екатерина Медичи пекех, Мария Тереза та лайăх пĕлӳ илнĕ, анчах та çывăх çыннисем воспитани пирки пачах та маннă пулас. "Çакă никама та шухăшлаттарман, – çырнă Павлак. – Унран, хăйĕн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшне качча тухнăскертен, ыррине никам та кĕтмен".



Апла-и, капла-и, Марийăна Австри престолĕ кĕтнĕ. 1740 çулта влаçа алла илнĕ вăл. Патшалăх йăлт арканнă… Европа ытти çĕр-шывĕ кĕç-вĕç тапăнса кĕрсе Австри çĕрĕсене ярса илме пултарнă.

Мария Тереза çанă тавăрсах кĕрешме пуçланă. Вĕçĕмех тенĕ пек хырăмлă çӳренĕскершĕн /20 çулта 16 ача çуратнă хĕрарăм/ çакă çăмăл пулнă тесе калама çук паллах. Мария трона тытса тăма пултарнă, Австри империне те сыхласа хăварнă. Влаçра 40 çул ларса хĕрарăм медицинăра, вĕренӳре, уголовлă айăплавра реформăсем ирттернĕ.

**7. Эммелайн Панкхерст, хĕрарăм прависемшĕн кĕрешекен**



1800-мĕш çулсен вĕçĕ… Эммелайн хĕрарăм прависемшĕн кĕрешекен çемьере çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕн шухăшĕпе, суйлава пурин те хутшăнма ирĕк пур. Çапах та хăйсен хĕр ачи хăçан та пулин арçын ачасемпе танлашма пултарасси пирки асличем тĕлленмен те ахăр… Анчах та ашшĕ-амăшĕн тĕллевĕсем пикен чун-чĕринех кĕрсе вырнаçнă.

20 çула çитсен Эммелайн хăйпе пĕр шухăшлă каччăпа çемье çавăрать. Вĕсен пилĕк ача çуралать. Пепкисемпе айланнă хушăрах амăшĕ хĕрарăм прависене хӳтĕлес енĕпе политикăри хастарлăхне чакармасть. Ӳссе çитсен ачисенчен хăшĕ-пĕри амăшĕн çулнех суйлать.

1903 çул тĕлнелле Панкхерст, тĕллевне пурнăçа кĕртес енĕпе лару-тăру пачах та улшăнманнине курса, пусăрăнать. Вăл хĕрарăмсен социаллă-политика союзне йĕркелет. Кĕçех ку организаци ыйтăва тата çӳллĕрех шайра çĕклет. Малтанах хĕрарăмсем мирлĕ хирĕçлевсем кăна йĕркелеççĕ-ха. Унтан чӳречесене çĕмĕрме пуçлаççĕ. Каярахпа чĕртсе çунтарас çул çине те тăраççĕ. Панкхерст тĕрмене темиçе хут та лекнинчен çавăнпах тĕлĕнме кирлĕ мар-тăр. Анчах та унта ахаль ларман-ха вĕсем. Эммелайнпа пĕр шухăшлă хĕрарăмсем унта та хăйсен прависене хӳтĕлеме пăрахман – выçă тытнă. Хуралçăсен вĕсене вăйпах апат çитерме тивнĕ. Çак тĕллевпе хĕрарăмсен çăварĕсемпе сăмсисене çинçе кĕпçесем чикнĕ – апат ун тăрăх пынă. Сас-хура тăрăх, Панкхерст хуралçăсен енне тĕм кăкшăмпа хăмсарнă – хăйне апат ирĕксĕр ан çитерччĕр тесе çапла хӳтĕленнĕ вăл.

Çакна каласа хăвармаллах. Эммелайн Панкхерст 1928 çулччен пурăннă – ку вăхăталла хĕрарăмсене суйлава арçынсемпе танах хутшăнма ирĕк панă ĕнтĕ…

**8. Хариет Табмэн, чукун çул кондукторĕ**



Чура пулса çуралнăскер, 1849 çулта вăл çĕр-шывăн çурçĕр пайне тарма мехел çитернĕ. Анчах та хăй ирĕке тухнипе çырлахман харсăрскер, каялла сахалтан та 13 хут таврăннă – тарнă ытти чурана пулăшма васкана. Хĕрарăм питех те çирĕп кăмăлпа палăрнă – револьвера яланах умĕнче тытса çӳренĕ, унпа чурасен хуçисене тата вĕсен йыттисене кăна мар, шикленнипе пăлханса ӳкнĕ таркăнсене те хăратнă.

Хăрушă çак çул çӳревсене тухнă чухне Табмэн амăшĕн туйăмне ас тивсе ĕлкĕреймен-ха.1874 çулта вара иккĕмĕш упăшкипе канашласа хĕр ачана Гертие усрава илнĕ. Шел, каярахпа хĕрарăмăн паттăрлăхне те, граждан вăрçинче пĕр шухăшлисен çарне пулăшнине те шута илмен – пособипе тивĕçтермелле туман. Мĕн пурнăçĕн вĕçне çитиччен Хариет чухăнлăхран тухма тапаланнă. Çапах та граждан хастарлăхне çухатман хĕрарăм. Арçынпа хĕрарăмăн суйлаври пĕр танлăхĕшĕн кĕрешнĕ. Чиркӳ ваттисемпе чухăнсем валли çурт çĕклес шухăшлине пĕлсен хăйĕн çĕрĕн пĕр пайне пĕр шухăшласа тăмасăр уйăрса панă.

**/«История, интересные факты, знаменитости»/.**

**Вĕçĕ çитес номерте.**



## ☺И-ХИ-ХИК☺

Нострадамус кушаккине ярса тытнă та пуçне пушмак ăшне чикет:

– Вăт кала мана – тепĕр çур сехетрен çакăнта кам варалĕ?!

* * *

– Чунăм, паян пирĕн пата хăнасем килеççĕ – тутли мĕн те пулин хатĕрле-ха унта.

– Юрать, хаклăскерĕм. Мĕнле янтăламалла – татах килччĕр-и е урăх ан килччĕр-и?

* * *

– Полици ĕçченне усал сăмахпа кӳрентернĕшĕн сирĕнтен – 250 тенкĕ штраф.

– Акă сана 1000 тенкĕ. Халĕ малалла итле.

* * *

Аннен кĕсье телефонĕ шăнкăртатать.

– Анне, эпĕ инкеке лекрĕм, укçа кирлĕ пулать, – илтĕнет пусăрăнчăк сасă.

– Мĕн туса тăратăн вара унта!? – тет сасартăк çывăх çыннăм. – Кӳнтеленсем пур-и? Апла тăк вĕсене персе пăрах та тар унтан!

Телефонпа ултавçăсем шăнкăравланине анне тӳрех ăнланса илнĕ-мĕн: ара, унăн ывăл çук вĕт, пĕр хĕр кăна. Телефон тепĕр вĕçĕнче вара тăрукках шăпланчĕç...

* * *

Автобусра пĕчĕк икĕ арçын ача юнашар лараççĕ.

– Эсĕ миçе çулта?

– Тăваттăла. Эсĕ вара?

– Пĕлместĕп.

– Элех ĕçетĕн-и?

– Çук.

– Хĕлсемпе çӳлетĕн-и?

– Çук.

– Тултатăн-и?

– Çук.

– А-а, апла эсĕ виççĕле кăна-ха.

* * *

Хăнаран таврăннă арăмĕ упăшкине каласа кăтартать:

– Каç питĕ аван иртсе кайрĕ. Ивановсем юрлама ыйтрĕç те эпĕ хирĕçлемерĕм.

– Çав кирлĕ-ха Ивановсене – хам та юратмастăп вĕсене.

* * *

– Мĕнле вара сирĕн кĕрӳ?

– Чаплах мар çав. Картла выляма пĕлмест.

– Аван вĕт-ха ку!

– Аванах мар çав – пĕлмест, хăй пур пĕр вылять...

* * *

– Мăшăрăм, ыран аннен çуралнă кунĕ иккенне манман-и? – ыйтать хĕрарăм упăшкинчен.

– Епле апла? – чунтанах тĕлĕнет лешĕ. – Пĕлтĕр кăна паллă турăмăр вĕт-ха...

* * *

– Пуçлăха каламалла-ха – офисра Интернет çыхăнăвне татчăр. Унсăрăн киле таврăнатăн та – пăхмалли вара нимĕн те юлман.

* * *

Тайгара иккĕн çĕтсе кайнă. Пулăшу ыйтса кăшкăраççĕ-кăшкăраççĕ – хирĕç сас паракан çук. “Сывлăшалла перха!” – хушать пĕри теприне. Переççĕ. Шăп. Пĕр вăхăтран татах пеме хушать. Каллех – шăп. Тĕттĕмленсе пырать. “Татах пер-ха”, – тет малтанхиех. “Урăх пултараймастăп”, – хирĕçлет иккĕмĕшĕ. “Мĕншĕн?” – “Ухă йĕпписем пĕтрĕç...”

* * *

Арăмпа вăрçăнтăмăр... Кухньăна кайса пĕтĕм банка хупăлчине хытăрах хупса лартрăм – уçма тăрса хăех ман пата мирлешме малтан пытăр.

* * *

Акăлчанла сыв пуллашу – тухса каятăн, “сывă пул!” та теместĕн. Вырăсла сыв пуллашу – пĕр 10 хутчен те “чипер юл!” тетĕн, анчах та хăв ниепле те тухса каймастăн.

* * *

Арçын командировкăна пуçтарăнать. Арăмне “шанăç пиçиххийĕ” тăхăнтартнă та унăн уççине юлташне парса хăварать.

– Вася, эсĕ мана йăнăш уçă парса хăварнă, – самантранах хăваласа çитет ăна юлташĕ.

* * *

– Арăма каратэ секцине çырăнтартăм.

– Вара мĕнле пек?

– Питĕ аван. Хваттерте тирпейлетĕп, тасататăп, апат пĕçеретĕп. Пĕлесчĕ санăн – япала çума тата мана мĕн тери килĕшет!

* * *

Икĕ каччă тĕл пулнă.

– Шерон Стоун патне çыру çырма аранах хăюлăх çитертĕм, – каласа кăтартать пĕри.

– Хуравларĕ-и вара?

– Паллах.

– Мĕн терĕ?

– “Хаклă палламанскерĕм, сирĕн ыйтăва тивĕçтерсе 20000 доллар ярса параймастăп”, – тенĕ.

* * *

Пасарта. Пĕр арçын тин кăна илсе килнĕ тавара тутанать. Пĕрне, теприне...

– Сире мĕн, нимĕн те килĕшмест-им? – ыйтать сутуçă.

– Килĕшет.

– Мĕн, укçа çук-им?

– Пур.

– Апла тăк туянăр мĕн те пулин.

– Мĕн тума?

– Мĕнле – мĕн тума? Çиме!

– Эпĕ халĕ мĕн тăватăп вара?

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**7.Срубы** для бани. Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём, навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89276689713.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **ТЕПЛИЦЫ, навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т. 89176529694, 89276679588.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**28.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. Т. 89370101054.

**29.Керамблок, кирпич.** Т. 378378.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент** М-500. Т.: 489277, 89033899038.

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу, щебень,** песок, **керамзит,** бетон, **чернозём,** навоз. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**103.Керамблок, кирпич, кольца.** Качественные. Д-ка. Т. 21-36-80.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

### ПРОДАЮ

**134.Кирпич, керамблок.** Заводские цены. Д-ка манипул. Т. 447353.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Цемент, гравмассу, песок.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**212.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89613429059.

**214.Теплицы из поликарбоната.** Скидки. Т. 8-917-654-85-07.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 89373918648, 8-927-853-57-32.

**238.Бетон, керамблоки, радиаторы.** Доставка. Тел. 67-14-22.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**289.Гравмассу, песок, керамзит, щебень.** Д-ка. Т. 89033225766.

### УСЛУГИ

**115.Наркология. Трезвая жизнь.** Т. 8-902-663-20-80. *Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**250.Кровельные, фасадные работы. Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 89063816037.

**286.Бурение скважин** на воду до 90 м. Качество. Т. 89278625531.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

### РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

**РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:**
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, “Чăваш хĕрарăмĕ”
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:**
55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 9298. Заказ 1634.